К74.2
К65
Ч-41809

# АВАЛЛĂХРА –
# ĂС ТАТА ВĂЙ





Национальная библиотека ЧР
4-041809

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ

обозначенного здесь срока

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |

М т 3 3835 Т 5000 1989г

К74.2
Обязат. экз.
К 65

В. З. Константинов, А.И. Васильев

# АВАЛЛĂХРА – ĂС ТАТА ВĂЙ

(Мăн Шетмĕ шкулĕ 175 çулта)

ПРОВЕРЕНО
20 __

Шупашкар
«Çĕнĕ Вăхăт»
2008

УДК 37. 0
ББК 74.03
К 65

**Константинов В.З., Васильев А.И.**
**Аваллăхра ăс тата вăй** (Мăн Шетмĕ шкулĕ 175 çулта). — Шупашкар, «Çĕнĕ Вăхăт», 2008. – 88 с.

ПРОВЕРЕНО
20 10

Ч-41809
Национальная библиотека
Чувашской
Республики

© Константинов В.З., 2008
© Васильев А.И., 2008

## УМСĂМАХ

Мăн Шетмĕ шкулĕ – Чăваш Республикин варринче вырнаçнă Трак тăрăхĕнчи чи ватти. Унăн историйĕ пуян та мухтавлă. Çак шкулта пĕлӳ илсе пурнăçăн анлă çулĕ çине тухнă кашни çын чăннипех мăнаçланма пултарать. Районта çеç мар, республикипех пĕлеççĕ кунтан тухнă патшалăх премийĕн лауреачĕсене. Вĕсен йышĕнче – Борис Романович Яковлев (Кăлава ялĕ), Владислав Петрович Петров (Шăпăрлăвар ялĕ), Николай Платонович Григорьев (Тури Типçырма ялĕ), Кăлава ялĕнчи Альберт Михайлович Захаров.

Мăн Шетмĕ çĕрĕ çинче выляса ӳссе вăй пухнă Владимир Васильевич Васильев Аттелĕхĕн Аслă вăрçинче паттăрлăх кăтартнă. Çавăншăн ăна Совет Союзĕн Геройĕ ятне панă.

Халăх хуçалăхĕн производствинче палăрнă пирĕн уйрăм ентешсене тĕрлĕ шайри Аслă Канаша суйланă. Акă, Альберт



**Мăн Шетмĕ шкулĕ. 1950–1952 çç.**

Захаров (Кӑлава ялӗ), Кушкӑ ялӗнчи Галина Титова (Романова) бригадирсем вӑл тапхӑрти СССР Аслӑ Канашӗнче ӗҫленӗ, сессисенче чӑваш халӑхӗн ыйтӑвӗсем пирки тухса калаҫнӑ.

Мӑн Шетмӗ шкулӗнче пӗлӳ илсе пурнӑҫӑн анлӑ ҫулӗ тӑрӑх ҫирӗп утакансем, ятлӑ-сумлӑ ҫынсем сахал мар. Вӗсенчен пӗрисем производствӑра палӑрнӑ. Тӗслӗхрен, Владислав Петров (Шӑпӑрлӑвар ялӗ) формовщик – Ӗҫ Мухтавӗн тулли орден кавалерӗ. Пӑрантӑк ялӗнчи пӗртӑван Земфирӑпа Вячеслав Ивановсем халӑх сывлӑхне сыхлас енӗпе тӗпчев ӗҫӗсем йӗркелеҫҫӗ. Владимир Филиппов шоферпа Николай Гаврилов сысна пӑхакан хӑйсен кун-ҫулне тӑван тӑрӑхпах ҫыхӑнтарнӑ.

Шкулӑн 175 ҫулхи тапхӑрӗнче кунтан вӗренсе тухнӑ ҫамрӑксенчен пурӑна киле паллӑ ҫынсем пулса тӑнӑ, ята-сума тивӗҫнӗ. Сирӗн аларта вӗсем ҫинчен кӗскен паллаштарас, тӑван енпе мухтанма пулӑшас тӗллевпе пичетлесе кӑларнӑ кӗнеке. Унӑн пӗрремӗш пайӗнче Мӑн Шетмӗ шкулӗн историйӗпе, кунта вӗреннӗ е ӗҫленӗ педагогсен ӗҫӗ-хӗлӗпе паллашма пулать. Ку тӑрӑх Чӑваш Республикинче спортпа физкультура, ҫарпа патриотизм юхӑмӗ анлӑ сарӑлнипе паллӑ. Мӑн Шетмӗри вӑтам шкултан тӗнче класлӑ спорт мастерӗ, Европӑра кӗмӗл тата пӑхӑр медальсене ҫӗнсе илнӗ Сергей Афанасьев, спортӑн 9 мастерӗ тата 19 кандидачӗ, тӗрлӗ шайри вуншар ӑмӑрту ҫӗнтерӳҫи вӗренсе тухнӑ. Иккӗмӗш пайӗнче шӑпах спортра, ҫарта тата йӗркелӗх хуралӗнче паларнӑ ентешсем, ҫемьесем ҫинчен каласа панӑ. Кӗнекере Аттелӗх Аслӑ вӑрҫине хутшӑннӑ, фронтран киле таврӑнайман ҫынсен хушамачӗсем, сӑн ӳкерчӗксем пур.

Васкаса хатӗрленӗ материалсенче, паллах, каласа е туса ҫитерейменни те пулӗ. Унашкаллишӗн авторсем вулакансенчен каҫару ыйтаҫҫӗ, сӗнӳсене Мӑн Шетмӗ шкулӗн дирекцине ҫитерессе шанаҫҫӗ.

## ШКУЛ – ПĔЛӲ ÇĂЛКУÇĔ

Мăн Шетмĕ Енĕ – Чăваш Республикинче паллă тăрăх. Ку кĕтесри 13 ялта çуралса ӳснĕ вуншар çын халăх хуçалăхĕн тĕрлĕ отраслĕнче палăрнă, ырă ят çĕнсе илнĕ.

Мăн Шетмĕ ял хутлăхĕ Красноармейски районĕн çурçĕр хĕвел анăç енче вырнаçнă. Хĕвел тухăç енчен ăна Яманак, кăнтăртан Карай тăрăхĕнчи ялсем çупăрлаççĕ. Хĕвел анăçĕнче Мăн Шетмĕ ял хутлăхĕ Элĕк районне кĕрекен Мартынкасси, Шур Пайраш çĕрĕсемпе, çурçĕрте кӳршĕри Пикшик ял хутлăхĕн территорийĕпе чикĕленет.

Мăн Шетмĕрен район центрне çитме 20 çухрăм, Шупашкара – 47. Хальхи вăхăтра ку тăрăхра пурăнакансене вăл е ку вырăна çитсе килме йывăр мар: Красноармейскине те, Чăваш Республикин тĕп хулине те хăтлă автобуссем çӳреççĕ.

Мăн Шетмĕ тăрăхĕн историйĕ пуян та мухтавлă. Паллах, пирĕн эрăчченех кунта финн-угор чĕлхипе калаçакан халăх çыннисем – çармăссем пурăннине çирĕплетеççĕ. Атăл çи Пăлхар çĕр-шывне тутар-монголсен çарĕсем аркатса тăксан, чăвашсен мăн аслашшĕсем – пăлхарсем пирĕн тăрăха тарса килнĕ. Вырăнти çынсемпе пĕр чĕлхе тупса килĕштерсе пурăнма тытăннă. Ку ене пăлхарсем XIV ĕмĕртех килсе вырнаçни паллă. Мăн Шетмĕ Енĕ – Чăваш Республикинче паллă ен. Ку тăрăхри ялсен историне, халап-юмахне тата йăли-йĕркине чăвашсен паллă этнографĕ, Мăн Шетмĕ чиркӳ прихучĕн пачăшки Николай Александрович Архангельский сахал мар тĕпчесе çырса хăварнă.

«Мăн Шетмĕ – Тинсарино – Большая Шатьма. Ял ятне Шупашкар уесне кĕнĕ Кинер вулăсĕнчи чăвашсем XVI ĕмĕрте Хусана илнĕ çулсенче куçса килсен панă. Ун пирки çакнашкал халап çӳрет. Виçĕ пĕртăвантан пĕри – Тинсар (Пайрашни Пусай хайсем пĕр ятлă ялсем йĕркеленĕ), юханшыв тăрăх анса, Мăн Шетмĕ ялне пуçарса янă. Вĕсем тата Янгильдино çĕр общинине кĕрекен ялсем (Ванюшкасси, Хусакасси, Кайри Карăк) 1781 çулччен Шупашкар уесĕнчи Кинер вулăсне кĕнĕ». Мăн Шетмĕ



**XX-мӗш ӗмӗр  пуҫламӑшӗ. Георги хӗресӗн 3 степеньлӗ кавалерӗ Иван Кузьмин (Йӗпрем) – сылтӑмра ларать.**

чиркӳ прихучӗн метрика кӗнекинче ку ята пуҫласа 1773 ҫулта асӑннӑ.

1551 ҫулта Вырӑс ҫӗр-шывне хӑй ирӗкӗпе кӗнӗ чӑвашсене те, ытти вак халӑхсем пекех, Христос тӗнне йышӑнтарма пуҫланӑ. 1752 ҫулта Тинсар ялӗнче (Мӑн Шетмӗре) Богоявлени чиркӗвне уҫаҫҫӗ, чиркӳ прихутне йӗркелеҫҫӗ. Ҫав тапхӑртан пуҫласа ӗнтӗ яла «Тинсарино», «Богоявленское» тесе ҫырма пуҫланӑ.

Чӑваш тӑрӑхӗнче те авалхи вӑхӑтри тӗрлӗ чир-чӗр хуҫаланнӑ. Ҫавӑнпах ӗнтӗ 1879 ҫулта Мӑн Шетмӗре фельдшер пункчӗ уҫнӑ. 1893 ҫулта вара кунта ялти участок больницине туса хунӑ. Унта куҫ, инфекци тата ача ҫуратмалли уйрӑмсем пулнӑ, чи малтанах 20 вырӑн шутланнӑ. Вӑл чиркӗве хирӗҫ, Хурӑнлӑ ҫулпа юнашар вырнаҫнӑ пулнӑ. 1911 ҫулхи сентябрӗн 21-мӗшӗнче Мӑн Шетмӗре ветеринари пунктне уҫма йышӑннӑ.

1826 ҫулта Мӑн Шетмӗре кирпӗчрен чиркӳ ҫуртне хута янӑ. Тепӗр 7 ҫултан чиркӳ ҫумӗнче йывӑҫран купаланӑ хурал ҫуртӗнче чиркӳ прихут шкулне уҫнӑ. Кунти пӗрремӗш учитель – Алексей



**XXI-мěш ěмěр пуçламăшě. И.Кузьминăн мăнукě Сергей Иванов – присяга тытнă хыççăн.**

Васильевич Краснов пачăшкă. Вăл хăй уçнă шкулта 1833–1839 çулсенче ěçленě, турă законне вěрентнě. 1839–1851 çулсенче ачасене пěлÿ пама Александр Иванович Архан-гельский священник хутшăнни паллă. Каярахпа – Иван Семенович Эминентов. Сăмах май каласан, А.И. Архангельский ачасене вěрентмелли икě кěнекене вырăсларан чăвашла куçарса пичетленě. Вěсенчен пěри – катехизис христиан тěн вěренěвě çинчен кěскен каласа пани.

Хусан ханлăхě вăхăтěнче хальхи Мăн Шетмě салинчен 2-3 çухрăм çурçěререх крепость – хула ларнă. Унта 7 çул хушши тутарсен çар ушкăнě тăнă. Вăл Хусан ханлăхěн чиккинчи форпостсенчен пěри пулнă. Çав вырăна паян та «Хулаш вырăнě» теççě.

Мăн Шетмě тăрăхěнче ытти аваллăх палăкěсем те пур. Н. Архангельский ку енчи Улăп тăприсемпе тěмěсем, кивě çăвасем, киремет вырăнěсем, ялсем епле пулса кайни çинчен çырса хунă. Вăл материалсене вырăссен паллă этнографне В.К. Магницкие ярса панă. Салара 1918 çулччěнех II Микулай патшана хисеплесе вырнаçтарнă палăк ларнă.

Мăн Шетмĕпе юнашар Владимиртан Хусан хулине каякан Кĕтерин патша тутарнă çул вырнаçнă. Халăхра ăна «Владимирка» е «Хурăнлă çул» теççĕ. Чăваш Республикин пирĕн районти территорине Етĕрнепе Çĕрпӳ уесĕсен хушшинчи çул тăрăхĕ кĕнĕ. Çак хурăн лартнă çул çинче Мартынкассинче арестантсене çĕр каçармалли çурт («ристан çурчĕ») пулнă.

Хальхи Юн кун ялĕ вырăнĕнче ĕлĕк лашасене улăштарса кантармалли хуралтăсем туса лартнă. Ăна «постоялый двор» («Дворики») тенĕ. Пурăна киле ку вырăна Анатри Пăрăнтăкран çынсем куçса аннă. Ялĕ шыв хĕрринче пулнă, тимĕрçĕ лаççи ĕçленĕ. Кĕçех ялта юнкун пасар ирттерме, суту-илӳ ĕçне йĕркелеме пуçланă. Çавăнпа ăна «Юнкун», вырăсла «Базарная слобода» тесе те палăртнă.

1842 çулта Юнкунра часавай лартнă. 1918 çулта ялта халăх çуртне (хальхи пек каласан клуб) уçнă. Хурăнлă çул Мăн Шетмĕ шывĕ урлă каçса (ĕлĕкхи колхоз сачĕ çумĕпе) Кӳлçырма – Кивьял енне тăсăлса выртнă.

* * *

Мăн ĕмĕтлĕ Александр Иванович Архангельский пачăшкă Мăн Шетмĕре хутла вĕрентмелли шкул кирлине аван ăнланнă. 1830–1833 çулсенчех хăйĕн çемйисенче 5–6 ача пулнă-çке. Пĕтĕмпе вара çак килте 10 пепке çуралнă. Чи кĕçĕнни – Н.А. Архангельский, паллă археолог тата этнограф, Мăн Шетмĕ тăрăхне çанă таварса тĕпченĕ пуп.

Шкул уçни вара çамрăк ăрăва вырăс тĕнне хăвăртрах ăша хывма чылай пулăшать-çке. Çавăнпах ĕнтĕ 1833 çулта йывăçран купаланă хурал çуртĕнче чиркӳ прихут училищине уçать. Чи малтанах унта чиркӳре ĕçлекенсен ачисем çеç çӳренĕ-ха. Вĕсене Архангельскисем вулама-çырма, хăйсене епле тытмаллине, ал ĕçне хăнăхтараççĕ. Вăл вăхăтра яллă вырăнсенче шкул-тавраш пачах пулман, вĕрентӳ кĕнекисем çитмен. А. Архангельский ку ĕçе харпăр хăй чун-чĕре хавалĕпе пурнăçласа пынă. Пирвайхи çулсем хыççăн хресчен ачисене тăван чĕлхепе пĕлӳ памаллине ăнланса илет. Каярахпа хăй тĕллевне пурнăçлатех. Вăл 1859 çулта «Таса истори», 1871 çулта «Катехизис» кĕнекесене чăвашла пичетлесе кăларать. Çавăншăн Православин Таса Синочĕ ăна тав тунă.



Паянхи шкул коллективĕ.

Сăмах май каласан, А.И. Архангельский çемйи Мăн Шетмĕ тăрăхĕнчи çамрăксене çутта кăларас, тăван çĕр-шыва хӳтĕлесе сусăрланнă салтаксене пулăшас тĕлĕшне пысăк та пархатарлă ĕçсем туса ирттернĕ. Хальхи Канаш районĕнчи Шаккăл ялĕнче тĕн çыннин килĕнче 1818 çулта çуралнă Сантăр. Хусанти тĕн семинарийĕнче пĕлӳ илнĕ хыççăн Мăн Шетмĕре тăрăшма пуçланă. Чăвашла лайăх пĕлнĕ, унăн хуйхи нушине аван ăнланнă. Ахаль мар ĕнтĕ ялсенче вырăс-туркка вăрçин сусăрĕсемпе начар пурăнакансен çемйисене пулăшас ĕçе йĕркелет. Çавăншăн ăна Раççейри Хĕрлĕ Хĕрес обществин паллипе наградăлаççĕ.

Вăл ачасене юратнă. Вĕсене вĕрентме тăрăшнă. Вунă ачинчен Нонна, Елизавета учитель ĕçне, Юлия, Ираида тата Борис врач ĕçне, Вячеслав, Леонидпа Николай ашшĕн ĕçне килĕштернĕ.

Николай Архангельский чунĕпе историк пулнă пуп. Анчах та вăл вăхăтри лару-тăру ăна пачăшкă пулма хистенĕ. Хăй тивĕçĕсене пурнăçласа пынисĕр пуçне чи кĕçĕнни тăван тăрăх историйĕпе интересленнĕ.

1891–1894 çулсенче Николай Александрович тăрăшнипе Токманейкино (Уйриçурт), Типçырма, Йĕпрем тата Пикшик ялĕсенче хутла вĕренмелли шкулсем уçать. Вĕсен ĕçне сăнаса тăрать, турă урокĕсене хăй йĕркелесе пырать. Вăл пĕлӳ панă чылай çамрăк каярахпа учитель пулса тăнă. Икĕ тĕслĕх çеç илсе кăтартасшăн.

Типçырмари Александр Егоров яланах чи лайăх вĕренекен шутланнă. Хусанти учительсем хатĕрлекен курсра пĕлĕвне тарăнлатсан алла кĕçĕн классене вĕрентме ирĕк паракан свидетельство илет. 1908 çулта тин уçăлнă Янкасри пуçламăш, кайран 1926 çулччен Упири икĕ сыпăклă шкулсенче пуçлăхра вăй хурать. Вăрçă умĕнхи çулсенче Сĕнтĕрвăрринчи вăрман хуçалăх техникумĕнче, вăтам шкулсенче ĕçленĕ.

Мăн Шетмĕрен Елена Матвеевна Петрова шăпи те çавнашкалах. Çамрăк ăрăва хутла вĕрентес çĕрте 50 çул ытла тăрăшнă вăл. Ăна Ленин орденĕпе наградăланă, «Чăваш АССР тава тивĕçлĕ учителĕ» ят панă.

Н.А. Архангельский, В.К. Магницкий (паллă этнограф-историк), Н.В. Никольский («Хыпар» хаçат редакторĕ – профессор, К.В. Харламович (паллă историк-профессор) ăсчахсемпе çыру çӳретнĕ. Вĕсене Мăн Шетмĕпе Упи прихучĕсенчи ялсемпе чиркӳсем пирки тĕрлĕ отчетсемпе картăсем, схемăсемпе

отчетсем ярса панӑ. Пачӑшкӑ – тавра пӗлӳҫӗ пурӗ 419 халап, Киремет пирки – 666. Улӑп тӑпри ҫинчен – 516, кивӗ ҫӑвасем – 487, хулаш вырӑнӗсем пирки аса илӳпе калав ҫырса хӑварнӑ. Ахаль мар ӗнтӗ Н. Архангельские Хусан университечӗ ҫумӗнчи археологи, историпе этнографи обществин чӑн членне суйланӑ. Вӑлах Етӗрне уесӗнчи 3-мӗш благочиннӑй округӑн историпе статистикин редакторӗ, Чӑваш облаҫӗн краеведсен пӗрлӗхӗн хастар членӗ шутланнӑ.

Пӗр вӑхӑт шкул тӗрлӗ сӑлтавсене пула хупӑнса тӑнӑ. 1881 ҫулхи сентябрӗн 14-мӗшӗнче Мӑн Шетмӗ чиркӳ прихутне кӗрекен хресченсем Етӗрнери уесри земство управинчен салара пуҫламӑш халӑх училищине уҫма ыйтнӑ.

Ҫӳлтисем килӗшнӗ, учителе тӳлеме ҫулталӑкне 240 тенкӗ, турӑ законӗсене irttерекене – 72, вӗренӳ хатӗрӗсем туянма 15 тенкӗ уйӑрнӑ: пурӗ – 327. Хресченсем халӑх училищине тытса тӑма кашни ҫынран 5-шер пус пухма (пурӗ 113 тенкӗ те 15 пус) йышӑннӑ.

Учительницӑра Елизавета Архангельская тӑрӑшнӑ. Тӗн урокӗсене унӑн шӑллӗ – Николай Александрович пуп irttернӗ. Шкул музейӗнче земство училищинчен пӗрремӗш кӑларӑмпа вӗренсе тухнӑ Захар Белкин свидетельствине кунҫырӑм (дневник) пур.

Ӗлӗк пирӗн тӑрӑхри чӑвашсем начар пурӑннӑ. Ҫемьере вӑтамран (1859 ҫулхи ревизи тӑрӑх) 6,6 ҫын шутланнӑ. Пуянраххисем 3,5х6 е 4х6 калӑпӑшлӑ ҫуртсенче пурӑннӑ пулсан, чухӑнсем – ҫурма ҫӗр пӳртре. 1884–1885 ҫулсенче чӑвашсем 15% куҫ чирӗпе (золотуха) чирленӗ. Ҫав хушӑрах тутарсем – 1,4% ҫеҫ. Ӳт-пӳ енчен пирӗн тӑрӑхри ҫынсен 93,7% начар пиҫӗхнӗ. 1895 ҫулта виҫӗ уесри чӑвашсен 18,3%, 1913 ҫулта – 21,5 проценчӗ ҫар службине юрӑхсӑр пулнӑ.

Шупашкар уесӗнчи чӑвашсем XIX ӗмӗрте мӗнле пурӑнни ҫинчен «Чебоксары и чебоксарцы» кӗнекере (А. Терентьев, Чебоксары, 1992, стр. 15–16) ҫапла ҫырнӑ.

«Они: 1) Робки, послушны и покорны. 2) Очень нетребовательны и неприхотливы в удовлетворении общечеловеческих жизненных потребностей... У чуваш во всем хозяйстве и домашней обстановке обыкновенно царит недостаточность, простота и неприхотливость. Хотя и к чувашам

проник уже чай и самовар, но, обыкновенно самовар встречается в деревне только у одного-двух самых богатых крестьян, но немало еще и таких деревень, где не найдешь ни одного самовара. Избы у чуваш обыкновенно очень малы, плохи, нечисты и в боль-шинстве случаев укрыты соломой. Очень еще много встре-чаются среди них так называемые «курные» избы. Мебель у них, посуда вся, вообще утварь очень скромны и убоги. В одеж-де и белье у чуваш тоже простота и бедность: полушубок и кафтан – единственная одежда на все времена года. Лишь богатые из них имеют, кроме того, тулуп или поддевку; суконные брюки надеваются немногими.

Большая часть чуваш довольствуется холщовыми штанами; сапоги среди них тоже редкое явление; на столе у чуваш наблюдается хлебная скудность; лишь богатые, имея достаточно скота, режут себе на мясо, а изредка даже и покупают его. Большинство же чрезвычайно редко пробует мясной пищи, обыкновенный же обед и ужин у них составляют: пустые щи или картофельная похлебка и хлеб, иногда пирог из тех же материалов; хотя у большинства чуваш имеются куры во дворе, но яйца от них обыкновенно все продаются, равно как и птица. Молоком чуваши питаются только летом, а по зимам они даже не доят коров, т.к. от плохого корма зимою у коров пропадает молоко; даже богатые чуваши, например, торговцы, отправляясь в дальний путь, берут с собою из дома достаточный запас хлеба и только; на постоялом дворе он не закажет ни самовара, ни обеда...»

Ялсенче час-часах ерекен тӗрлӗ чир-чӗр хуҫаланнӑ, ҫемйиҫемйипе леш тӗнчене ӑсатнӑ. Паллах, йӗркеллӗ тӑхӑннӑ тата апатланнӑ, ҫирӗп сывлӑхлӑ ҫынсем ҫеҫ хӑйсен ӑратне ӳстерсе пыма пултарнӑ.

Ҫакнашкал йывӑр лару-тӑрура та пысӑк тавракурӑмлӑ учительсем ертсе пынипе вӗренекенсем лайӑх пӗлӳ илнӗ, ҫӗршыва юрӑхлӑ ҫын пулма тӑрӑшнӑ. Мӑн Шетмӗре малтанах пуҫламӑш, каярахпа икӗ сыпӑклӑ, 1932 ҫулсенче колхоз ҫамрӑкӗсен шкулӗ ӗҫленӗ.

Мӑн Шетмӗре Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗнчен пӗлӳ илсе тухнӑ педагогсем те вӑй хунӑ. Акӑ, 1907–1910 вӗренӳ ҫулӗсенче Гавриил Филиппович Филиппов ӗҫленӗ. Вӑл Етӗрне уесне кӗнӗ Шӑмат

вуләсӗнчи Ҫӗнӗ Тинкӗш ялӗнчен. Унӑн йӑмӑкӗ ҫав тапхӑртах Чатукассинче, янкасра пӗлӳ панӑ. Каярахпа Мария Филиппова Упире ӗҫленӗ, кунтах качча тухнӑ. 1915 ҫулта Мӑн Шетмӗре Иван Яковлевӑн тепӗр вӗренекенӗ Юлия Петровна Павлова ӗҫлени паллӑ.

1940 ҫулта Ҫӗннел Шетмӗре ҫуралса ӳснӗ Илья Тихонович Соловьев тӑрӑшнипе вӑтам шкул уҫнӑ. Ку тӑрӑхри ҫамрӑксем унччен ҫак тӗллевпе Тивӗше е Траха ҫул такӑрлатнӑ.

Анчах ҫамрӑксен малашлӑх ӗмӗтне хӑрушӑ вӑрҫӑ татнӑ. Учительсен пысӑк пайне фронта мобилизациленӗ, чылайӑшӗ хӑйсен ирӗкӗпе ӑсаннӑ. Педагогсем ҫитмен пиркиех кунта каллех тулли мар вӑтам пӗлӳ пама пуҫланӑ.

## ПАЛЛĂ ÇЫНСЕМ

### Раççей Федерацийĕн тава тивĕçлĕ (лесовочĕ) вăрманçи

Дмитриев Иван Дмитриевич (Пăрăнтăк) – Санкт-Петербургри вăрман техникин академийĕн доценчĕ.

### Раççей Федерацийĕн тава тивĕçлĕ учителĕ

Яковлева Нина Васильевна (Вăрманкас-Шетмĕ) – Раççей Федерацийĕн тава тивĕçлĕ учителĕ – Яманакри 8 çул вĕренмелли шкул педагогĕ.

### Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ учителĕсем

Александров Михаил Александрович (Анаткас – Шетмĕ) – чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен.

Васильева Алевтина Дмитриевна (Кушкă) – Алманчри вăтам шкулти тăван чĕлхепе литературине вĕрентекен.

Ильин Михаил Ильич (Кушкă) – чăваш-нимĕç гимназийĕн учителĕ.

Кузьмин Леонид Кузьмич (Кушкă) – Мăн Шетмĕ вăтам шкулĕн директорĕ.

Михайлов Лев Иванович (Шапкин) – Мăн Шетмĕри вăтам шкул учителĕ.

Петрова Елена Матвеевна (Мăн Шетмĕ) – ялти, Тракри шкулсенчи пуçламăш класс учительници.

Павлов Виталий Арсентьевич (Шор-Пайраш) – Мăн Шетмĕ вăтам шкулĕн директорĕ.

Петрова Елена Федоровна (Çеньял – Шетмĕ) – Пикшикри вăтам шкулти учительница.

## Халăха вĕрентес ĕç отличникĕсем

Александрова Антонина Васильевна – Мăн Шетмĕри вăтам шкулăн пуçламăш класс учительници.

Александров Михаил Александрович (Анаткас-Шетмĕ) – Мăн Шетмĕри вăтам шкул педагогĕ.

Васильева Алевтина Дмитриевна (Кушкă) – Алманчри вăтам шкул педагогĕ.

Дмитриев Василий Дмитриевич – Мăн Шетмĕре ĕçленĕ педагог.

Егорова Милентина Петровна (Мăн Шетмĕ) – Алманчри вăтам шкул учительници.

Иванова Марина Ивановна (Кăлава) – Красноармейскинчи пĕрремĕш вăтам шкул педагогĕ.

Ильин Михаил Ильич (Кушкă) – Красноармейскинчи пĕрремĕш вăтам шкул учителĕ.

Кузьмин Леонид Кузьмич (Кушкă) – «Мичуринец» совхоз директорĕ.

Иванова Людмила Ивановна – Мăн Шетмĕри вăтам шкулăн пуçламăш класс учительници.

Михайлова Нина Петровна – Мăн Шетмĕри вăтам шкул педагогĕ.

Петрова Елена Федоровна (Çĕньял Шетмĕ) – Мăн Шетмĕ вăтам шкулĕн учительници.

Петров Николай Петрович (Мăн Шетмĕ) – тăван шкул директорĕ.

Петрова Фаина Павловна – Мăн Шетмĕ вăтам шкулĕн педагогĕ.

Павлов Виталий Арсентьевич (Шур Пайраш) – Мăн Шетмĕ вăтам шкул директорĕ.

Мартынова Нина Петровна (Анаткас) – Мăн Шетмĕри вăтам шкулăн кĕçĕн классене вĕрентекен.

Скворцова Лилия Никифоровна (Мăн Шетмĕ) – Кушкăри 8 çул вĕренмелли шкул учителĕ.

Филиппов Эдуард Георгиевич (Упаçырма) – Мăн Шетмĕ вăтам шкул учителĕ.

Яковлев Яков Яковлевич (Кушар) – Мăн Шетмĕри вăтам шкул учителĕ.

Семенова Инна Леонтьевна (Анатри Типçырма) – Шупашкарти 18 профтехучилище педагогĕ.

Семенов Леонтий Семенович (Шор-Пайраш) – Кушкă шкул директорĕ.

### Кинофикации ĕçĕн отличникĕ

Силов Григорий Тимофеевич (Мăн Шетмĕ) – районти кинофикации уйрăмĕн пуçлăхĕ.

### Сывлăха сыхлас ĕç отличникĕ

Григорьева Маргарита Никоноровна (Мăн Шетмĕ) – Çĕрпӳ районĕнчи страховой больницăн кассин директорĕ.

### Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ изобретателĕ

Хомсков Петр Терентьевич (Тури Типçырма) – Шупашкарти В. Чапаев ячĕллĕ производство пĕрлешĕвĕн конструкторĕ.

### Чăваш Республикин суту-илĕвĕн ĕçченĕ

Романова Тамара Романовна (Кăлава) – Шупашкарти «Волжанка» столовăйăн производство пайĕн ертӳçи, Хисеп палли орден кавалерĕ.

### Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ художникĕ

Михайлов Станислав Николаевич (Станислав Юхтар) – Мăн Шетмĕ шкулĕн педагогĕ.

### Чăваш АССР искусствисен тава тивĕçлĕ ĕçченĕ

Григорьев Алексей Григорьевич – И.Я. Яковлев ячĕллĕ педагогика институчĕн ӳнерпе графика факультечĕн деканĕ.

### Чăваш АССР тава тивĕçлĕ артистки

Чернова Зоя Мироновна (Кушкă) – Чăваш патшалăх юрăпа ташă ансамблĕн солистки.

## Наука ĕçĕнче палăрнисем

Александрова Людмила Антоновна (Кушар) – Чăваш патшалăх педагогика университечĕн доценчĕ, биологи наукисен кандидачĕ.

Григорьев Николай Платонович (Тури Типçырма) – КПСС Центральнăй Комитечĕн инструкторĕ, техника наукисен кандидачĕ, Ленин премийĕн лауреачĕ.

Григорьев Алексей Григорьевич (Четрик) – Чăваш педагогика университечĕн ӳнерпе графика факультечĕн деканĕ, искусствоведени наукисен кандидачĕ.

Иванов Дмитрий Иванович (Кăлава) – наука ĕçченĕ, хими наукисен кандидачĕ.

Львов Геннадий Дмитриевич (Четрик) – инженер-химик, химии наукисен кандидачĕ, çар полковникĕ.

Киясов Вадим Григорьевич (Мăн Шетмĕ) – Мускаври наукăпа тĕпчев институчĕн сотрудникĕ, техника наукисен кандидачĕ.

Николаев Вениамин Федорович (Анатри Типçырма) – Санкт-Петербургри врач-экспертсен пĕлĕвне ӳстерекен институтăн медсоц экспертиза кафедрин преподавателĕ, медицина наукисен кандидачĕ.

Степанов Виталий Степанович (Пикшик) – И.Я. Яковлев ячĕллĕ педагогика университечĕн доценчĕ, педагогика наукисен кандидачĕ.

Степанов Юрий Никитич (Кăлава) – Чăваш патшалăх университечĕн доценчĕ, физикăпа математика наукисен кандидачĕ.

Яковлев Борис Романович (Кăлава) – Мускаври Наукăпа инженери çăмăллăхĕсен центрĕн директорĕн çумĕ, техника наукисен кандидачĕ, СССР патшалăх премийĕн лауреачĕ.

Яковлев Петр Яковлевич (Упа çырми) – Чăваш патшалăх университечĕн доценчĕ, филологи наукисен кандидачĕ.

Петров Геннадий Петрович (Анаткас) – Çĕрпӳри ӳсентăрана хӳтĕлекен лаборатори заведующийĕ, ял хуçалăх наукисен кандидачĕ.

Федоров Валерий Аркадьевич (Пăрăнтăк) – Чăваш патшалăх университечĕн преподавателĕ, экономика наукисен кандидачĕ.

Ч-41809
Национальная библиотека Чувашской Республики

## Чăваш Республикин ял хуçалăх тава тивĕçлĕ ĕçченĕ

Григорьев Яков Михайлович (Кушар) – «Мичуринец» ял хуçалăх производствин коллективĕн директорĕ, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ.

Гаврилов Николай Егорович (Кушар) – «Мичуринец» совхозăн Кушарти тата Пăрăнтăкри сысна ферминчи сысна пăхакан, Хисеп палли орден кавалерĕ. Вăл РСФСР тата ЧАССР Президиумĕн Хисеп Грамотисене тивĕçнĕ.

Ильина Мария Ильинична (Пикшик) – «Большивик» колхозри сĕт-çу фермин доярки.

## СССР Журналисчĕсен Союзĕн членĕсем

Григорьев Алексей Григорьевич (Четрик) – пединститутăн ÿнерпе графика факультечĕн деканĕ.

Константинов Владимир Захарович (Анатри Типçырма) – Тракан чăваш-нимĕç гимнази педагогĕ.

Павлов Петр Иванович (Анаткас) – Кÿкеçри «Тăван ен» хаçатăн çырусен пайĕн пуçлăхĕ.

Маркова Анна Васильевна (Кушар) – Çĕрпÿри район хаçачĕн редакторĕ.

## Чăваш Республикин музыка обществин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ

Григорьев Наум Григорьевич – районти культура пайĕн пуçлăхĕ.

## СССР писателĕсен союзĕн членĕсем

Яковлев Петр Яковлевич – Петĕр Яккусен (Упаçырма) – 8 кĕнеке авторĕ. Ачасем валли «Библи» куçарма хутшăннă.

Трофимов Прохор Трофимович (Анаткас) – писатель-фронтовик.

## СССР художникĕсен Союзĕн членĕсем

Григорьев Алексей Григорьевич (Четрик) – Чăваш пединститучĕн худграф факультечĕн деканĕ.

Михайлов Станислав Николаевич (Юхтар) – Мăн Шетмĕри вăтам шкул педагогĕ.

**Техника наукисен кандидачĕ**

Степанов Юрий Никитич (Кăлава) – Чăваш патшалăх университечĕн доценчĕ.

**Фармацевтика наукисен кандидачĕ**

Иванов Вячеслав Потапович (Пăрăнтăк) – Мускаври мединститут деканĕ.

**Медицина наукисен кандидачĕ**

Иванова Земфира Потаповна (Пăрăнтăк) – врач.

**Биологи наукисен кандидачĕ**

Александрова Людмила Антоновна (Кушар) – Чăваш патшалăх педуниверситечĕн доценчĕ.

**Чăваш Республикин культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ**

Трофимов Прохор Трофимович (Анаткас) – вăрçăпа патриотизм темипе çырнă писатель-фронтовик.

Степанов Илья Романович (Кушкă) – хăй тĕллĕн вĕреннĕ композитор.

Маркова Анна Васильевна (Кушар) – Çĕрпӳ районĕн хаçачĕн тĕп редакторĕ.

Юдин Анатолий Иванович (Кушкă) – Вăрнарти райĕçтăвкомăн культура пайĕн пуçлăхĕ.

**Чăваш республикин тава тивĕçлĕ строителĕ**

Павлов Иван Павлович (Тури Типçырма) – Чăваш кĕнеке издательствин инженер-строителĕ.

Семенова Галина Димитриевна (Кушкă) – 4-мĕш стройтрестăн СУ-25 аслă прорабĕ.



Александров
Михаил Александрович



Антонов
Юрий Ильич



Арсентьев
Иван Николаевич



Александрова
Людмила Антоновна



Волков
Геннадий
Иванович



Васильева
Алевтина Дмитриевна



Гаврилов
Николай Егорович



Григорьев
Николай Григорьевич



Захаров
Альберт Михайлович



**Зорина
Лидия Ильинична**



**Иванов
Вячеслав Потапо-
вич**



**Иванов
Дмитрий И.**



**Иванова
Земфира Потапов-
на**



**Ильин
Михаил Ильич**



**Кузьмин
Леонид Кузьмич**



**Львов
Геннадий
Леонтьевич**



**Маркова
Анна Васильевна**



**Михайлов**
**Лев Иванович**



**Михайлов**
**Станислав Николае-**
**вич**



**Меркурьев**
**Николай Николае-**
**вич**



**Никитина**
**Валентина Якимовна**



**Николаев**
**Вениамин Федоро-**
**вич**



**Павлов**
**Виталий Арсентье-**
**вич**



**Павлов**
**Иван Павлович**



**Петров**
**Василий Петрович**



**Петров**
**Николай Петрович**



**Петрова Елена Федоровна**



**Романова Галина Мироновна**



**Романова Тамара Романовна**



**Семенов Леонтий Семенович**



**Семенова Галина Дмитриевна**



**Степанов Виталий Александрович**



**Степанов Виталий Никитич**



**Степанов Илья Романович**



**Степанов Юрий Никитич**



Тимофеев
Владимир Семенович



Тихонов
Валерий Архипович



Федоров
Валерий Аркадьевич



Филиппов
Эдуард
Георгиевич



Яковлев
Борис Романович



Яковлев
Петр Яковлевич



Яковлева
Нина Васильевна

Ытти çĕрти пекех, Мăн Шетмĕри тĕрлĕ шайри шкул-сенчете çамрăксене тăван çĕр-шыва юратма, ăна хӳтĕлеме яланах хатĕр пулма вĕрентнĕ. Педагогсем ачасене аслисене хисеплеме, вĕсене куллен пулăшса тăма хăнăхтарнă.

Пирĕн тăрăхри чăвашсен пурнăçĕ те ĕлĕк çăмăл пулман. Вырăс патшалăхĕнче тăнă чухне вĕсене 25-шер çуллăха çара илсе кайнă. Çар хӳтлĕхĕсем тумалли йывăр ĕçсене кӳлнĕ, вăрçă–харçă нушисене тӳсме тивнĕ. Тĕрлĕ çĕрте ырă пурнăç шыраса çӳренĕ пирĕн ентешсем те Степан Разина Искей Пай-тулĕ пуçарнă 1670–1671 çулсенчи пăлхава хутшăннах ĕнтĕ. Тепĕр çĕр çултан сиксе тухнă «хресчен патшин» – Емельян Пугачевăн вăрçинче вара Мăн Шетмĕсем историех кĕрсе юлнă. 1774 çулхи июлĕн 18–19-мĕшĕсенче Пăкача Çĕрпӳ хулине тытса илнĕ. Тинсанирăра, Кĕçĕн Шетмĕре, Тивĕшре хресченсем пупсене çакса вĕлернĕ. Пугачев çарĕ хыççăн хăваласа пыракан патша салтакĕсем Мăн Шетмĕри пăлхавçăсене тытса хупаççĕ. Вĕсене Череватов батальонĕнчи 25 салтакпа пĕр офицер хуралланă. Июлĕн 27-мĕшĕнче ухă-сăнăпа, чукмар – пуртăпа хĕç-пăшалланнă салари 500 хресчен тыткăнри пăлхавçăсене ирĕке кăларма сыхлав салтакĕсене тапăнать. Тытăçура салана чĕртсе яраççĕ. Пушара чиркӳ çыннисемпе салтаксем аран-аран сӳнтереççĕ.

Каярахри çулсенче те Мăн Шетмĕ енчи хресченсем хăйсене вăйпа хĕсĕрленине, тĕрĕсмарлăха хирĕç пĕрре кăна мар тăнă. Акă, 1866 çулта кунти хресченсем чиркĕвĕн руга тӳлевĕ пысăккине хирĕçлесе пăлхав çĕкленĕ, ăна тӳлеме килĕшмен.

Халăхăн массăллă паттăрлăхĕ уйрăмах çĕр-шыв умĕнчи йывăрлăхпа инкекре палăрать. Пĕрремĕш тĕнче вăрçи вăхăтĕнче те çаплах пулнă. Пирĕн тăрăхри çĕршер çын Раççее хӳтĕлеме фронта тухса кайнă. Чылайăшĕ вĕсенчен паттăрлăхпа хăюлăх кăтартнă. Хăйсен ячĕсене историрех çырса хăварнă.

## АН ПУЛТĂР ВĂРÇĂ НИХĂÇАН

Мăн Шетмĕ тăрăхĕнчи çынсем хăйсем тăван çĕр-шывшăн кĕрешме яланах хатĕр пулнине Аслă Аттелĕх вăрçинче те çирĕплетнĕ. Ку енчи 13 ялтан çав тапхăрта фронта 680 çын тухса кайнă. Вĕсенчен 327-шĕ тăван кĕтесе урăх таврăнайман. Чылай çемьере ашшĕ-амăшне пăхма тивĕç ывăлсем е кил-çурт пуçĕсем вăрçă хирне выртса юлнă. Кашни салтак-офицерах ирсĕр фашистсене хăвăртрах çапса аркатса юратнă тăванĕсем патне таврăнас тесе çапăçнă. Çĕр-шыва юратни ял хутлăхĕнчи Кăлавари 62 çынна вăрçă хирне чĕннĕ. Вĕсенчен (шел пулин те) 25-шĕ тăван çемйине таврăнайман. Çăв шутра фронта кайнă тăватă пĕр тăванран Николай, Вячеслав тата Изосим Петровсем. Ку çемьери Фаинăпа (вăл та вăрçăра çапăçнă) Катя Мăн Шетмĕре вĕреннĕ. Асли, Коля ялта хут пĕлменлĕхе пĕ-тересси шĕн тăрăшнă. Хастар комсомолец 1930–1932 çулсенче Чулхулари (Горький) автомобиль заводне тума хутшăннă. Колхоз бригадирĕ каярахпа çав хулари ударниксен съездне йĕлтĕрпе кайнă. Вăл Мускава хӳтĕлесе хыпарсăр çухалнă. Вячеслав экономист специальнăçне алла илнĕ. Ленинград çывăхĕнче пуçне хунă. Чăваш педагогика институтĕнчен вĕренсе тухнă Изосимăн та, çамрăк ăрăва историпе паллаштарас вырăнне вăрçа тухса кайма тивнĕ. Артиллери батарейисен командирĕ 1945 çулхи февралĕн 8-мĕшĕнче Бранденбургран инçех мар ĕмĕрлĕхех пуçне хунă. Фаина Петрова врач-хирург (медицина службин аслă лейтенанчĕ) тăшмана тăванĕсемшĕн те, ял – йышшăн та тавăрнă, киле çĕнтерӳпе таврăннă. Кайран тивĕçлĕ канăва тухиччен Мăн Шетмĕри участок больницинче тĕп врач пулса коллектива ертсе пынă.

Ивановсен кил-йышĕнчен те вăрçăра тăваттăн çапăçнă. Афанасипе Иван фронта лекиччен учитель профессине суйласа илнĕ. Çĕр-шыва хӳтĕлесе Егорпа Маргарита та хăйсен çарти тивĕçне чыслăн пурнăçланă. Хĕрĕ çыхăнуçă пулнă, вăл та медальсене тивĕçнĕ. Çĕнтерӳ хыççăн чылай вăхăт «Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцийĕн коллективĕнче ĕçленĕ.

Тура шĕкĕр, Антоновсем те (Филипп, Петр, Иван тата Евдокия) киле сывах таврăннă. Вăрçă хырçи – марçине сахал мар тӳснĕ салтаксем халĕ пирĕн хушăра çук ĕнтĕ. Аслă хĕрĕн (вĕсен тата Рая пур) алла указка-кĕнеке тытиччен винтовка çакса çӳреме тивнĕ.

Виçĕ çул çурă тăшман сывлăшран тапăнассинчен хӳтĕлекен тата систерсе çыхăну йĕркелекен 101 ятарлă батальонри службăра тăнă Е. Антонова. Кайран лента тĕртекен фабрикăра ĕçленĕ. 1966 çулта производство паттăрне тивĕçлĕ наград шыраса тупать. Хастар сновальщицăна Ленин орденĕпе чыслаççĕ.

Алексеевсен çемйинчен Иван, Василий тата Евстафий вăрçăра çапăçнă. Вĕсенчен вăтам ывăлĕ кăна ашшĕ-амăшĕ патне таврăннă. Çĕнтерӳçĕ салтака Василий Алексеевича (Хĕрлĕ Çăлтăрпа Отечественнăй вăрçă орденĕсен кавалерне) каярахпа чукун çул транспорчĕн милицине ĕçлеме чĕннĕ.

* * *

Вăрçă çулĕсене илес пулсан... Аса илмелли, çырмалли хамăр йăхрах нумай. Мăн кукаçи Михайлов Константин патша çарĕнче 8 çул хушши хĕсметре тăнă. Унăн ачин, Константинов Тихонпа мăшăрĕн Элексей, Йăван, Татьян, Кĕтерин тата Кĕркури пепкесем çуралнă. Иккĕмĕш тĕнче вăрçи пуçлансан ывăлĕсем пурте çĕр-шыва хӳтĕлеме ăсаннă. Асли пулеметчик пулнă, хăюлăхшăн Хĕрлĕ Çăлтăр орденне тивĕçнĕ. И. Тихонов Мăн Шетмĕри пуçламăш, каярахпа кунти колхоз çамрăкĕсен шкулĕсенче вĕреннĕ. Çемье пуçлăхĕ хирĕçленине пăхмасăрах (хуçалăхра ĕçлекен кирлĕ пулнă – ашшĕ шăнса сусăрланса юлнă) Сĕнтĕрвăрринчи çĕр йĕркелӳпе мелиорации техни-кумĕнче пĕлӳ пухнă. Хастар каччă кунти çамрăксен ертӳçи шутланнă. Çавăнпах ăна районти комсомол райкомĕн секре-тарьне суйласа лартнă.

1939 çулхи июнĕн 28-мĕшĕнче Тихонова Чăваш комсомол обкомĕн хресчен çамрăкĕсен пайĕн ертӳçине суйланă. Тепĕр виçĕ уйăхранах, вара, ăна кадрсем çитмен пирки, комсомол шефа илнĕ çарпа флота ăсатнă. Киле килес умĕн вара хăрушă самана сиксе тухнă. Украинăра службăра тăракан 147 стр. дивизин 649-мĕш пулеметлă полкăн политрукĕ Йĕпрем çынни – Иван Тихонов ахăр саманара хыпарсăр çухалнă.



**Васильев**
**Владимир Васильевич**

Мăн Шетмĕре 1911 çулхи июлĕн 20-мĕшĕнче çуралнă. Выçлăх çулĕнче ашшĕ-амăшĕ вилнĕ. Ялта йĕркеленĕ ача-пăча садикне (пахчине, С. Тимофеевпа-Четрик) пĕрле çӳренĕ. Кайран Чул хулари ача çуртĕнче ӳснĕ, кунти автозавода тума хутшăннă. Çар службине Минск хулинче кавалери чаçĕнче ирттернĕ, ăста та харсăр салтак шутланнă. Тăнăç пурнăçра та В. Васильева çамрăк салтаксене вĕрентме явăçтарнă.

Аттеллĕх вăрçине ăна 1942 çул пуçламăшĕнче мобилизациленĕ. Утлă çар корпусĕнче пулеметчик пулнă, Мускава хӳтĕленĕ, тăшман тылне çӳренĕ. Çапăçури хăюлăхшăн пирĕн ентĕше икĕ хутчен Хĕрлĕ Çăлтăр, Отечественнăй вăрçăн икĕ орденĕпе, «Мускава хӳтĕленĕшĕн» тата ытти медальсемпе наградăланă. Вăл лайăх разведчик-кавалерист шутланнă.

1945 çулхи январьте Одер шывĕ урлă каçнă чухне Владимир Васильев паттăрлăх кăтартнă. Хăйсем тытса илнĕ плацдарма хӳтĕлесе чăваш каччи вуншар фашиста тĕп тунă, тăшманăн 4-5 атакине сирсе янă. Тан мар çапăçура пулемет расчечĕн командирĕ пĕчченех тăрса юлнă, çапах гитлеро-вецсене ирттерсе яман. Одер патĕнчи паттăрлăхшăн Владимир Васильев чăваша Совет Союзĕн Геройĕ ятне панă.

Ентеш ятне халăх манмасть. Хăй çуралса ӳснĕ ялта ăна асăнса 1975 çулта палăк уçнă. Авторĕ – Вениамин Александров, Малти Карăк çынни. Мăн Шетмĕре тата Трак ялĕнче В. Васильев ячĕпе урамсем хисепленеççĕ. Мăн Шетмĕри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкула В. Васильев паттăр ятне панă. Чул хулара та ăна асăнса палăк лартнă, унăн ячĕллĕ урампа шкул пур.

Мăн Шетмĕре халĕ пурăнакан Васильевсем паттăр тăванĕн ĕçне-хĕлне малалла тăсаççĕ. Клим Васильев – паллă спортсмен-тренер. Вăл – Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ учителĕ. Геннадий ирĕклĕ майпа кĕрешсе спорт мастерĕн кандидачĕн ятне тивĕçнĕ. Витя та лайăх спортсмен пулнă. Паян Генăпа Витя хресчен-фермер хуçалăхне аталантарса пыраççĕ.



**Алексеев Василий Алексеевич**



**Ефимов Селиван Ефимович**



**Трофимов Прохор Трофимович**



**Виноградова Фаина Петровна**



**Захаров Михаил Захарович**



**Фронтовиксем – Ивановсем.**



**Петрова**
**Раиса Петровна**

Хăрушă вăрçă çулĕсенче фронта пулăшас, çĕнтерĕве çывхартас тĕллевпе ялти кашни çын тăрăшнă, хăйсенчен мĕн килнине пурне те пурнăçланă. Пăрăнтăкри Раиса Петровна бригади «Красный Порденер» колхозра кок-сагыз ӳстернĕ. Ку культура тымаррипе (каучук вырăнне) парашют тунă çĕрте усă курнă. Апла пулсан, çак çимĕçе туса илсе фронта ытларах продукци ăсатмалла пулнă. 1944 çулхи çу уйăхĕнче Пăрăнтăксем Чăваш Республикинчи ку енĕпе ĕçлекен мĕн пур бригадăпа звенона социализмла ăмăртăва анлăрах сарса яма чĕнсе каланă. Комсомолăн Чăваш обкомĕ ку пуçарăва ырланă, кок-сыгыза ытларах туса илме сĕннĕ. Кĕркунне Р.Петрован çамрăксен бригади 5 гектар çинчен кашнинчен 20-шер центнер кок-сыгыз пухса кĕртнĕ. Пĕтĕм Союзри ăмăртура чăваш хĕрĕсем иккĕмĕш вырăна тухнă. Çĕнтерӳçĕсене ВЛКСМ Тĕп комитечĕпе СССР çĕр ĕç халăх комиссариачĕ 3000 тенкĕпе, грамотăпа чысланă. Бригадира кĕмĕл сехетпе, колхозпе çине М.Петрова сунар пăшалĕпе, «Хĕрлĕ Порденер» хуçалăхри комсомол организацине (секретарĕ – Вера Викторова) хут купăс парса чысланă. Вĕсемсĕр пуçне каучук туса илес енĕле ĕçлекен Анисия Егорова, Ольга Трофимова тата Нина Трофимова звеньевойсене укçан преми тата резина калушпа хавхалантарнă. Бригадăри 6 хастара «Халăх çĕр ĕçĕн ăстисем (отличниксем)» ят панă. Тепĕр çулĕнче пирĕн ентешсем тата лайăххрах кăтартупа палăрнă. А.Егорова гектаран 68-шар, Р.Петрова – 48,5 центнер продукци илнĕ.

## АСТĂВĂМ КĔНЕКИНЧЕН

### с. Большая Шатьма

АЛЕКСАНДРОВ Андрей Александрович, род. 1915. Рядовой.
АЛЕКСЕЕВ Анатолий Алексеевич (1923–1964). Рядовой.
АЛЕКСЕЕВ Николай Алексеевич, род. 1925. Рядовой.
АРТЕМЬЕВ Димитрий Артемьевич, род. 1918. Рядовой.
АФАНАСЬЕВ Никтополион Афанасьевич, род. 1917. Рядовой.
ВАСИЛЬЕВ Алексей Васильевич, род. 1921. Рядовой.
ВАСИЛЬЕВ Петр Васильевич (1914–1970). Рядовой, шофер 219 отд. автб.
ВАСИЛЬЕВ Петр Васильевич (1923–1970). Рядовой.
ГУРЬЕВ Александр Гурьевич, род. 1919. Лейтенант, 470 сп, зам. комроты 194 сд, 49 А, ЦФ.
ДИМИТРИЕВ Алексей Димитриевич, род. 1901. Рядовой.
ЕГОРОВА Кликерия Егоровна, род. 1920. Рядовая.
ИВАНОВ Прокопий Иванович, род. 1913. Рядовой.
МИХАЙЛОВ Авраам Михайлович (1900–1973). Рядовой, сапер 109 сапб.
НИКИФОРОВ Роман Никифорович (1922–1998). Рядовой, лин. надсмотрщик 341 лбе.
НИКИФОРОВ Рудольф Никифорович, род. 1924. Рядовой.
ПЕТРОВ Григорий Петрович, род. 1902. Рядовой, стрелок 977 сп, 9 р 3 б.
ПРОКОПЬЕВ Василий Прокопьевич. Рядовой.
СЕМЕНОВ Николай Семенович, род. 1927. Рядовой.
СКВОРЦОВ Николай Петрович (1914–1966). Ст. сержант, 2 отд. гв. мот. инжб. Ранен.
СМЕЛОВ Илья Степанович (1915–1952). Рядовой.
ТИМОФЕЕВ Сила Тимофеевич (1900–1974). Рядовой, стрелок 53 зап. сп.
ТУГАНОВА Зинаида Тугановна, род. 1911.
ШАПОШНИКОВ Иван Сергеевич (1902–1963). Рядовой, кузнец, минометчик 356 отд. минп.

**д. Анаткасы**

АЛЕКСАНДРОВ Андрей Александрович (1923–1993). Рядовой, стрелок 447 сп.

АЛЕКСАНДРОВ Василий Александрович (1916–1966). Рядовой, сапер 32 инжб, сапер-подрывник 16 гв. отд. бн, 1 ишп, десантник отд. отряда особого назначения НКВД.

АНАНЬЕВ Георгий Ананьевич (1924–1993). Сержант, ком. расчета 288 сп, наводчик 197 зап. сп, ком. орудия 152 гв. сп, ЮЗФ. Ранен.

АНДРЕЕВ Александр Андреевич (1905–1952). Рядовой.

АНДРЕЕВ Георгий Андреевич, род. 1894. Рядовой.

АНДРЕЕВ Иван Андреевич (1900–1981). Рядовой, стрелок 261 сп.

АНДРЕЕВ Михаил Андреевич (1904–1943). Рядовой.

АНИСИМОВ Аркадий Анисимович, род. 1923. Рядовой.

ВАСИЛЬЕВ Павел Васильевич, род. 1921. Старшина, 159 ап, 75 сд, БФ. Ранен.

ВОЛКОВ Андрей Филиппович, род. 1908. Ст. сержант, зкпч 703 сп. Ранен.

ГЕРАСИМОВ Иван Герасимович (1927–1997). Мл. сержант, писарь 718 цент, военной базы.

ГРИГОРЬЕВ Александр Григорьевич (1927–1982). Мл. сержант, наводчик.

ГРИГОРЬЕВ Семен Григорьевич, род. 1922. Рядовой.

ДАНИЛОВ Степан Данилович (1900–1976). Рядовой, сапер 439 осапб.

ЕГОРОВ Владимир Егорович (1913–1990). Рядовой, кавалерист 50 кп, стрелок 1012 сп, хлебопек 346 ПХП, ПФ. Ранен.

ЕГОРОВ Филипп Егорович (1915–1985). Рядовой, санитар 1013 сп, ЛФ.

ЕФИМОВ Василий Ефимович (1908–1968). Сержант, вет. санитар 245 арт. ВЛ, сапер 933 сп, вет. инструктор 4 отд. троф. бн. Ранен.

ЕФИМОВ Степан Ефимович. Рядовой. ЕФИМОВ Федор Ефимович (1908–1952). Рядовой.

ИГНАТЬЕВ Агний Игнатьевич, род. 1926. Рядовой.

ИГНАТЬЕВ Сергей Игнатьевич, род. 1900. Рядовой. КОНСТАНТИНОВ Николай Константинович. Рядовой.

КОСОВ Григорий Васильевич, род. 1893. Рядовой.

КУПРИЯНОВ Василий Куприянова (1906–1964). Ефрейтор,

автоматчик 65 арм. запр. отряда, сапер 197 инжб.
КУПРИЯНОВ Григорий Куприянович (1918–1968). Лейтенант, зам. ком. трансп. роты, зам. ком. б, нач-к контрразведки.
МАРТЫНОВ Петр Николаевич, род. 1895. Рядовой.
МАТВЕЕВ Данил Матвеевич, род. 1912. Рядовой.
МИХАЙЛОВ Виктор Михайлович, род. 1926. Рядовой.
МИХАЙЛОВ Михей Михайлович, род. 1894 Рядовой.
МОЧАЛОВ Иван Данилович, род. 1915. Рядовой.
НИКИТИН Емельян Никитич (1916–1984). Рядовой, стрелок 6 гв. сп, Кал. Ф. Ранен.
НИКИТИН Константин Никитич (1895–1960). Рядовой.
НИКИТИН Наум Никитич, род. 1926. Рядовой.
НИКИФОРОВ Василий Никифорович, род. 1911. Мл. сержант, ком. отдел, отряда 72 тп.
НИКОЛАЕВ Иван Николаевич, род. 1923. Ст. сержант, стрелок 127 зап. сп, ком. стр. отдела 81 гв. сп, 2-й УФ.
ПАВЛОВ Аркадий Павлович, род. 1920. Рядовой, 33 отд. ммбр, стрелок 33 управления воен. стр-ва.
ПАВЛОВ Иван Павлович (19091–999). Рядовой, кладовщик 266 отд. сб. Ранен.
ПЕТРОВ Петр Петрович. Рядовой.
РОМАНОВ Иван Романович (1925–1994). Рядовой, стрелок 378 сд. Ранен.
СЕМЕНОВ Андрей Семенович (1921–1980). Рядовой, телефонист 1 зап. пс, 161 бр, вычислитель 726 пап. Ранен.
СЕМЕНОВ Никифор Семенович (1895–1969). Рядовой.
СТЕПАНОВ Александр Степанович (1915–1995). Рядовой, телефонист 16 сд, 1022 сп. Ранен.
СТЕПАНОВ Алексей Степанович, род. 1898. Рядовой.
СТЕПАНОВ Андрей Степанович (1908–1993). Рядовой, сапер 422 отд. рабб, ком. орудия 20 зап. ап, 1311 иптап, 20 пап. Ранен.
СТЕПАНОВ Николай Степанович (1896–1963). Рядовой.
ТРОФИМОВ Прохор Трофимович (1908–1991). Полковник, зкпч, ЮФ, Ст. Ф, 2-й БФ.
ФЕДОРОВ Владимир Федорович, род. 1894. Рядовой.
ФЕДОРОВ Иван Федорович, род. 1903. Рядовой, ком. орудия 5 отд. адн, 149 гв. ап, ДВФ.
ФЕДОРОВ Павел Федорович (1908–1973). Сержант, ком. орудия 24 отд. бронепоезда, 42 зенад.

ФЕДОРОВ Роман Федорович (1894–1967). Рядовой.
ФИЛИППОВ Александр Филиппович (1924–2002). Комвзвода 237 сп. Ранен.
ЮДИН Михаил Юдич (1901–1985). Мл. сержант, 1013 сп. Ранен.
ЮДИН Сидор Юдич, род. 1905. Мл. сержант, 97 об химич. отбора, ком. машины АРС 8 мехбр.

**д. Бурундуки**

АЛЕКСЕЕВ Александр Алексеевич, род. 1924. Мл. сержант, стрелок 158 сп, ком. отдел. 197 минп, 23 гв. сп, 1-й УФ.
АЛЕКСЕЕВ Василий Алексеевич, род. 1924. Рядовой.
Алемпия Михайловна

## ÇЫРАВÇĂСЕМ

Мăн Шетмĕри шкултан вĕренсе тухнă çынсем хушшинче хăйсен кун-çулне хаçат-журналпа çыхăн тарнисем те сахал мар. Чи аслă ăрури – Çеçмерте çуралса ÿснĕ Тарас Кириллович Кириллов (1880–1920). Вăл тухăçлă ĕçленĕ тата хайлавĕсене халăх патне çитернĕ çыравçă. 1880–1920 çулсенче Тарас Мăн Шетмĕри пуçламă шкулта хутла хăнăхнă. 1895–1899 çулсенче Хусанти учительсен семинарийĕнче ăс пухнă. Учительте, пунра чылай вăхăт ĕçленĕ. «Тырă пулнă çул» (1903), «Пулăшăр» (1905), «1812 çулхи вăрçă çинчен çырнă юрă», «Салтак арăмĕ поэмăсенче ял çынин йывăр пурнăçĕ çинчен ĕненмелле çырса кăтартнă.

### Прохор Трофимович Трофимов (1908–1991)



Анаткас ялĕнче çуралнă. Кунта пуçламăш шкулта, Хĕвелтухăç халăхĕсен коммунизмла университетĕнче вĕреннĕ. Хĕрлĕ çар ретĕнче службăра тăнă. Ахаль салтакран полковника çити ÿснĕ. Вăрçа хутшăннă, 10 орден илме тивĕç пулнă. Вăл Хĕрлĕ Ялав орденне 3 хутчен илме пултарнă пĕртен – пĕр чăваш. Çапăçу хирĕнче мĕн тÿссе ирттернине П. Трофимов «Сталинградцы» романра, «Атăл хĕрринчен Берлина çити» аса илÿ, «Сталинград çулăмĕ» тата ытти кĕнекесенче çырса кăтартнă. Салтаксемпе офицерсен паттăрлăхĕ çамрăк ăрăва тивĕçлĕ воспитании парса ÿстерме пулăшать. Писатель-фронтовикăн çак ырă ĕçне хакласа ЧР Журналистсен союзĕ Прохор Трофимова Çемен Элкер премине парса чыс тунă. Вăл – Писательсен союзĕн членĕ.

Çĕнтерÿ хыççăн 12 çул хушши ДОСААФăн Чăваш обкомне ертсе пынă. Прохор Трофимович – Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ.



**Яковлев**
**Петр Яковлевич**

(Яккусен) поэт Упаçырма ялюнче çуралнă. Чăваш патшалăх университетĕнче ăс пухнă, аспирантурăра вĕреннĕ. Филологи наукисен кандидачĕ, ЧПУри чĕлхе кафедрин доценчĕ пулнă. Унăн 10 сăвă кĕнеки пичетленсе тухнă. «Кумаляк», «Тăм тăвайкки вăййисем», «Уй варринче», «Юман чĕлхи», «Çавра кӳлĕ» тата ыттисем. Юлашки вăхăтра ачасем валли Библи кĕнекине чăвашла куçарса кăларма хутшăннă. Чăваш писателĕсен ретĕнче тăрать.

**Соловьев**
**Илья Тихонович**
**(1906–1943, Çĕньял-Шетмĕ)**

Районта паллă педагог. Ишекри икĕ сыпăклă шкулта, Чăваш патшалăх педагогика институтĕнче вĕреннĕ. Кушкăри пуçламăш, Мăн Шетмĕри тулли мар вăтам ял шкулсенче ĕçленĕ. Ăста педагог, пропагандист, çыравçă – сатирик шутланнă. «Капкăн» журналпа, район хаçачĕпе тачă çыхăну тытнă. Вĕсенчи шӳтле хайлавсем пурнăçра тĕл пулнă çитменлĕхсене пĕтерме, тĕрлĕ чиновник – бюрократсене тӳрĕ çул çине кăларма пулăшнă. Районти 6 делегат йышĕнче чăваш çыравçисен пĕрремĕш съездне (1934) хутшăннă. Хăйĕн кулăшла статйисемпе калавĕсене вăл Супенкке Илли псевдонимпа пичетленĕ.

Хамăр тăрăхри вĕрентекенсен профсоюзĕн районти секретарĕ шутланнă. И. Соловьев тăрăшнине 1939 çулта Мăн Шетмĕре вăтам шкул уçнă, унăн пĕрремĕш директорĕ пулнă. Вăрçăра вилнĕ.

**Трофимов**
**Георгий Трофимович**
**(1926–1988, Кушар)**

Педагог-çыравçă. Унăн йĕплĕ сăввисем «Капкăнпа» «Тăван Атăл», «Ялав» журналсенче, «Коммунизм ялавĕ», «Ял пурнăçĕ» хаçатсенче час-часах кун çути курнă. Унăн уйрăм сăввисене

композиторсем юрра хывнӑ. «Тавтапуҫ, сана учитель» юрӑ (И. Степанов кӗвӗленӗ) час-часах Чӑвашрадио эфирӗнче янӑрать.

Р. Трофимов районти шкулсенче вырӑс чӗлхине литературине, музыкӑна вӗрентнӗ, Кушкӑра ӗҫленӗ чухне художество пултарулӑх ушкӑнӗпе республикӑри юрӑпа ташӑ уявне хутшӑннӑ, лауреат ятне тивӗҫне.



**Петров**
**Николай Петрович**
**(Четрик)**

Профессийӗпе учитель. 25 ҫул ытла районти шкулсенче ҫамрӑксене ҫирӗп пӗлӳпе тивӗҫлӗ воспитании парас тӗлӗшпе ҫанӑ тавӑрса ӗҫлерӗ. Кушкӑра тата Карайра директор ҫумӗнче тӑрӑшрӗ. Мӑн Шетмӗри вӑтам шкул коллективне ӑнӑҫлӑ ертсе пычӗ, кунтах чӑваш наци музейне йӗркелесе экскурсисем йӗркелерӗ. Чун хавкаланӗпе Н. Петров – философ-ҫыравҫӑ. Хӑйӗн тӗнче ӑнланӑвне, шухӑш-кӑмӑлне вӑл чӗринче шӑрҫаланакан йӗркесенче уҫса парать. Унӑн сӑввисем чӗлхе илемӗпе, янравлӑхӗпе тематикипе вулакансене тыткӑнлаҫҫӗ. Ӑста педагог-краевед республикӑри хисеплӗ тавра пӗлӳҫӗ, районти Нестер Янкас пӗрлӗхӗн лауреачӗ.



**Семенов**
**Леонтий Семенович**

Хушамачӗ те Мӑн Шетмӗ тӑрӑхӗнче хисеплӗ. Салари, Кушкӑри (кунта чылай вӑхӑт директор пулнӑ) шкулсенче ӗҫленӗ. Мичурин ячӗллӗ хуҫалӑха ертсе пынӑ. Пултаруллӑ педагог-руководитель пушӑ вӑхӑтра алла ручка тытнӑ. Хӑйне мӗн савӑнтарни – пӑшӑрхантарни пирки шурӑ хут ҫине ҫырса хунӑ. Сӑввисем вара республикӑри тата районта хаҫат-журналсенче пичетленнӗ.

Леонтий Семенович – ӑста купӑҫӑ та. Хӑй ӗмӗрӗнче 50 яхӑн туйри ял-йыш кӑмӑлне тивӗҫтернӗ вӑл. Роза, Инна тата Олег ятлӑ ачисем ҫамрӑксене вӗрентес ӗҫре тӑрӑшнӑ. И.Л. Семенова

пĕр хушă Мăн Шетмĕре директорăн воспитани енĕпе ĕçлекен çумĕнче вăй хунăччĕ.

Л. Семенов – сăвăç-лирик. Унăн И. Степановпа çырнă «Ай, юрлар-и» юрă кĕнеки (2004) халăхри хăвăрт саланса пĕтрĕ. Аслă юлташăмăр тĕрлĕ конкурссен дипломанчĕ, Н. Янкас пĕрлĕхĕн лауреачĕ пулнă.

Аслисенчен Романова (Николаева) Альбина Михайловна (Тăватпӳрт), Яковлева Галина Григорьевна (Кушкă) тата ыттисем те вĕренсе пыраççĕ. Вĕсем иккĕшĕ те учительсем. Пĕри Чăрăшкассинче (сăмах май каласан, Альбинăн пиччĕшĕ Петр Романов та педагог-Ишекре), тепри Мăн Шетмĕре çамрăксене чăвашлăха хăнăхтараççĕ. Çав хушăрах сăвăсем çыраççĕ, вĕсене пичетлесе кăлараççĕ. Г. Яковлева-Çуткул хăйĕн икĕ сăвă пуххине кун çути кăтартрĕ.

Мăн Шетмĕри вăтам шкулта вĕренсе пĕлӳ илнĕ çамрăксенчен пурăна киле «Раççей журналисчĕсен союзĕн членĕ» ята тивĕçнисем хушшинче: П.Т. Трофимов (Анаткас), А.Г. Григорьев (Четрик), П.И. Павлов (Анаткас), В.З. Константинов. Сумлă Прохор Трофимович фронтовик – писатель пирки çӳлерех асăннăччĕ. Малалла кĕскен ыттисене сăмах парар.

**Павлов**
**Петр Иванович**

Анаткас çынни. Мăн Шетмĕре вĕреннĕ чухнех шкул, колхоз хыпарĕсене район хаçатĕнче çутатса тăнă. Çар службинче тăнă, стройкăра ĕçленĕ тапхăрта та çыркаланă. Хастар корреспон-дента Шупашкар районĕн «Тăван ен» (Кӳкеç) хаçатне чĕнсе илнĕ. Мĕн тивĕçлĕ канăва тухиччен кунти коллективра вăй хунă. Çырусен пайĕн пуçлăхĕ пулса вуншар тĕрленчĕкпе очерк, репортажпа интервью тата ытти корреспонденци кун çути кăтартнă.



**Константинов**
**Владимир Захарович**
**(Анатри Типçырма)**

1965 çултанпах республикăри, районти хаçат-журналпа тачă çыхăну тытать. Пĕрлĕ вырăнсенче ĕçленĕ: ВЛКСМ райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ, 1981–1992 çулсенче «Ял пурнăçĕ» хаçат редакторĕн çумĕ, ха-

лĕ – Трак нимĕç-чăваш гимнази педагогĕ. Районти краеведсен ертӳçи пулнă май, тăван тăрăх историйĕпе, унăн паллă çыннисемпе интересленет. Ку енĕпе пурĕ 7 брошюра пичетлесе кăларнă.

В. Константинов республикăри таврапĕлӳçĕсен хисеплĕ ĕçченĕ, районти Н. Янкас пĕрлĕхĕн лауреачĕ шутланать. Вăл – спорт ветеранĕ те. Юлашки çулсенче çеç Кивĕ Йĕкĕт – Красноармейски чупура, С. Афанасьев парнисемшĕн пынă ăмăртура çĕнтернӗ.

## ÇЕМЬЕ ДИНАСТИЙĚСЕМ

Мăн Шетмĕ тăрăхĕнчĕ ĕлĕкренпех туслă та ĕçчен çынсем пурăннă. Ялта шкул, чирку, участок больници пурри кунта пурăнакансене çывăхланма пулăшнă. Эрнесерен пухăнакан Юнкун пасарĕпе çулталăкри акатуй çынсене пĕтĕçтернĕ, Яш-кĕрĕме пĕр-пĕринпе паллаштарнă. Тăвансем хăйсен ывăлĕ-хĕрĕ валли тивĕçлĕ мăшăр тупса пама тăрăшнă. Çапла вара ялпа ял туслашнă, пĕр-пĕринпе хурăнташланнă.

Салари вĕреннĕ çынсем (ĕлĕкрех чиркӳре тата шкулта ĕçлекенсем) аякри ялсенчи ача-пăчана та çутта кăларма тăрăшнă, мал ĕмĕтлĕ пулнă. Çавăнпах ĕнтĕ Шăпăрлăвар- Токманейкино, Типçырма, Йĕпрем, Пикшик ялĕсенче Н.А. Ар-хангельский пачăшкă, паллă этнограф-краевед тăрăшнипе, хутла вĕрентекен шкулсем уçнă. Çапла вара çутçанталăка (язычество) ĕненнĕ тĕттĕм те мĕскĕн чăвашсене Христос тĕнне хăвăртрах ĕнентерме май килĕ тесе шухăшланă.

Вĕрентӳ тытăмĕ йĕркеленсен, учительсем пурнăç хушни-сĕннипе пĕр шкултан тепĕр çĕре куçма пултарнă. Апла пулсан, Мăн Шетмĕри педагогсем маларах асăннă шкулсен ĕçне йĕркелесе тăнă. Район туса хурсан Кушкăри, Мартынкассинчи вĕрентекенсемпе килĕштерсе ĕçленĕ. Урăхла каласан, аслă та ватă шкулăн, кунти учительсен витĕмĕ ыттисене те ыра кӳнĕ. Çавăнпа та авторсем вăл е кун çын пирĕн патра 1 çул çеç ăс пухнă, çемьери 5 ачаран виççĕшĕ кăна пĕлӳ илнĕ тесе уйăрма тăрăшман. Вĕсем пурте Мăн Шетмĕ шкулĕн, кунти вĕрен-текенсен, лайăх кил-йышăн витĕмĕпе ӳссĕ çитĕннĕ.

Акă, Александр Георгиевич Егоров Мăн Шетмĕри чиркӳ прихут училищине пăхăнса тăнă Типçырмари хутла вĕренмелли шкула çӳренĕ. Вĕсен ялĕнче ăна Н.А. Архангельский 1892 çулта уçнă, кунта пĕчĕк Е.А. Архангельская çутта кăларнă. Чи лайăх вĕренекен шутланнă Сантăр. Мал ĕмĕтлĕ çамрăк пĕлĕвне хăй тĕллĕн ӳстерсе Хусанти учительсем хатĕрлекен курсран кĕçĕн классене вĕрентме май паракан свидетельство илсе тухать. Тусайри, Янкасри (заведующи) пуçламăш, Упири икĕ сыпăклă



**Яковлевсем – медработниксем.**

(директор) шкулсенче 1903–1923 çулсенче ĕçленĕ. Икĕ аслă пĕлӳ илнĕ, нимĕç, акăлчан чĕлхисемпе шакăлтатсах калаçнă. Иккĕмĕш тĕнче вăрçи умĕн Сĕнтĕрвăрринчи вăрман тех-никумĕнче вĕрентнĕ А. Егоров. Ачисем те, Зоилпа (вăрçăра вилнĕ) Руфина, Нинăпа Виктор, аслă пĕлӳ илнĕ ăста спе-циалистсем пулнă.

Ку тăрăхри кашни ялтах çемье династине йĕркелесе ăна аталантаракансем пур. Ял хуçалăхĕнче, сывлăха сыхлас, халăха вĕрентес çĕрте, спортпа çар е йĕркелĕх службинче, ал ĕç ăсталăхĕнче е наукăра – халăх хуçалăхĕн пур отраслĕнче те пур вĕсем.

Кушарти çак туслă та хунавлă Яковлевсен çемйине республикипех лайăх пĕлеççĕ. Яков Яковлевич – педагог, Мăн Шетмĕре ĕçлесех тивĕçлĕ канăва тухрĕ. Мăшăрĕ Елена Антонова пĕтĕм кун-çулне кунти больницăра ирттерчĕ. Ачисем – Валентин, Алина тата Татьяна халăх сывлăхне сыхлас ĕçе килĕштерчĕç. Аслă ывăлĕ тата кĕçĕн хĕрĕ рентгенологра кашннех 31–33 – шер çул тăрăшаççĕ.

Иккĕшĕ пĕр хушă тăван тăрăхра вăй хучĕç, Мăн Шетмĕри участок больницинче тимлерĕç. Т. Григорьева (Яковлева) халĕ районти тĕп поликлиникăри флюорографи уйрăмĕнче ĕçлет. Алина Яковлева, амăшĕ пекех, акушер-гинеколог. Аслă пĕлӳллĕ врач стажĕ – 39 çул. Красноармейскинче тĕп врач çумĕнче, Шупашкарти ача çуратмалли пĕрремĕш номерлĕ больницăн тĕп

врачӗнче ӗҫленӗ. 1997 ҫулта Чӑваш Республикинче чи лайӑх врач-гинеколог ятне тивӗҫнӗ. Унӑн хӗрӗ Оля та тухтӑр. Вӑл Шупашкарти пӗрремӗш хула больницинчи функциаллӑ диагностика врачӗ шутланать.

Сӑмах май каласан, Валентин Яковлевичӑн ҫемйи те сывлӑх сыхлавӗнче тӑрӑшать. Людмила Вениаминовнӑн ӗҫ стажӗ 40 ҫул яхӑн. Вӑл та врач-лаборант. Ирина хӗрӗ те 8-мӗш ҫул кунашкал ӗҫрех вӑй хурать. Чи интересли – Яковлевсен кинӗ те – Людмила Аркадьевна – амӑшне хывнӑ. Вӑл халӗ – районти тӗп больницӑри ача ҫуратмӑлли уйрӑм заведующийӗ. Килӗштернӗ ӗҫе 32 ҫул халалланӑ. Ывӑлӗ – Вадим Шупашкарти 3-мӗш хула больницинче врач-травматолог. Шухӑшлатап та тӗлӗнетӗп: Яковлевсен пӗтӗмӗшле ҫемье династийӗн ӗҫ стажӗ – 240 ҫул.

Ку тӑрӑхра Мӑн Шетмӗри Н.П. Петровпа Н.А. Петров, Филипповсен, Михайловсен, Маринкинсем, Кӑлавари Захаровсен, Анаткасри Семеновсен педагог ҫемйисем хисепре. Аслӑ ӑрурисем Анаткасри Волковсене – вӑрман ӗҫченӗсене, Пӑрӑнтӑкри Герасимов ал ӗҫ ӑстисене, Кушарти Васильев механизаторсене ӑшшӑн аса илеҫҫӗ. Салари Елена Матвеевна Петрова Чӑваш АССР тава тивӗҫлӗ учителӗ тата Екатерина Васильевна Архангельская вӗрентекенсене халӑха ҫутта кӑларма хастар хутшӑннӑшӑн Ленин орденӗпе хисеп тунӑ. Юнкунри Сергеевсен педагог ҫемйин хунавлӑ йывӑҫӗ пирки те Шупашкарта аван пӗлеҫҫӗ. Йӗпремри Тимофеевсен, Васильевсемпе Ивановсем, Анатри Типҫырмари Сверчковсемпе Николаевсен тата Тимофеевсен кил-йышӗнчен ял хуҫалӑхӗн ӑста специалисчӗсем тухнӑ. Акӑ, Владислав чылай вӑхӑт «Красное Сормово» хуҫалӑхра тӗп зоотехникра тӑрӑшрӗ. Викторпа Татьяна ветеринар ӗҫне килӗштернӗ. Халӗ В.Ф. Николаев выльӑх – чӗрлӗх чирне хирӗҫ кӗрешекен районти ветеринари службине ертсе пырать. Унӑн ывӑлӗ Женя Чӑваш ял хуҫалӑх академийӗн ветеринари факультечӗн иккӗмӗш курсӗнче вӗренет. Веня Николаев вара ҫынсен сывлӑхне сыхлас енӗпе ӗҫлет. Вӑл Санкт-Петербургри врач-эксперт, медицина наукисен кандидачӗ.

Андрей Тимофеев Мичурин ячӗллӗ колхозра тӗп бухгалтерта ӗҫленӗ, арӑмӗ – Клавдия Александровна шкул бухгалтер-кассирӗ пулнӑ. Мӑн Шетмӗ шкулӗнче илнӗ пӗлӳпе Викторп Галина ял хуҫалӑх институтӗнчен, Зойӑпа Надежда désinstitutran, Анна Улатӑрти совхоз-техникумран вӗренсе тухрӗҫ. В.А. Тимофеев халӗ ФГУн «Чувашмелиоводхоз»

управленийĕн Красноармейскинчи филиалĕн тĕп гидромелиораторĕ шутланать. Галя Сĕнтĕрвăрринчи вăрлăх инспек-цийĕн начальникĕнче, Зоя Шуршăлти вăтам шкулта матема-тикра тăрăшать. Надежда – Красноармейскинчи иккĕмĕш шкулăн педагогĕ.

Педагогика ĕçĕн ветеранĕн Леонтий Семеновăн çемйи те кун-çулне. Мăн Шетмĕ вăтам шкулĕпе çыхăнтарнă. Çемье пуçлăхĕпе Инна хĕрĕ кунта вĕрентнĕ. Олег районти вĕрентӳпе производство комбинатĕнче çамрăксене ял хуçалăх техникин никĕсне алла илме пулăшнă. Роза та – воспитательница. Шупашкарти пир-авăр фабрикинче мастер пулса вăй хунă.

Тăван çĕршыва юратни, ăна хӳтĕлеме хатĕр тăни уйрăмах уншăн йывăр вăхăтра сисĕнет. Пĕрремĕш тĕнче вăрçине пи-рĕн тăрăхри çĕршер çын хутшăннă. Чылайăшĕн ячĕ паттăрлăх историне çырăнса юлнă. Акă, Кăлавари Иван Захаров Австрипе Венгри салтакĕсене хирĕç çапăçнă. 1915 çулхи тапхăрта хăюлăх кăтартнă. Кĕçĕн унтер-офицер II-мĕш Çĕпĕр стрелковăй полкра стрелок шутланнă. Апрелĕн 16-мĕшĕнче Дв. Баржимов хули çывăхĕнче вăл йывăр аманнă, апла пулин те çапăçу хирĕнчен тухман, ыттисене хăй тĕслĕхĕпе хавхалантарса тăнă. Çавăншăн ăни 4-мĕш степеньлĕ Георги хĕресĕпе наградăланă.

Июнĕн 25-мĕшĕнче И. Захаров тепĕр хут палăрнă. Тăшман пирĕн салтаксене çавăрса илме шухăшланă. Кăлава çынни хăй пулемечĕпе лесник çуртĕнчен кăнтăрарах позицийи йышăннă. Тĕл персе-çунтарса нимĕçсен ĕмĕтне пурнăçланма паман. Çак паттăрлăхшăн чăваш каччине 59412 номерлĕ 3-мĕш степеньлĕ Георги хĕресĕпе чысланă. (ЦГА ЧР, ф. 307, оп. 2, д. 434, л. 299–302.)

Çав вăрçăра Мăн Шетмĕ шкулĕнче вĕреннĕ ытти арçынсем те палăрнă. Юнкунри Матвей Григорьев, Кушарти Петр Иванов, Упаçырмара Ф. Антоновпа А. Михайлов, Йĕпремри И. Кузьмин Георги хĕресĕн кавалерĕсем шутланнă.

Иван Кузьмич та пĕрремĕш тĕнче вăрçи çулĕсенче хăй тивĕçне чыслăн пурнăçланă. Утлă çар артиллеристне çапăçусенчи паттăрлăхшăн 4–2-мĕш степенлĕ Георги хĕресĕпе, «Хăюлăхшăн» медальпе наградăланă. И. Кузьмин Аттелĕх вăрçи вăхăтĕнче ĕç фронтĕнче пулнă, Шупашкарти «320» заводра ĕçленĕ.



**Васильевсем – офицерсем.**

Сăмах май каласан, унăн Михаил тата Фома ывăлĕсем хăйсен таса тивĕçне шăпах утлă çар артиллерийĕнче ирт-тереççĕ. Аслисем ачисене аслашшĕн кун-çулĕ, хăйсен службăри пурнăçĕ çинчен каласа панах ĕнтĕ. Шăпа-ши – Ф. Ивановăн Володя тата Миша ывăлĕсем те артиллери çар хĕсметĕнче тăнă. Костя – шыв ай карапĕн машинист – трубочисчĕ. Унăн ывăлĕ вара – Сергей Иванов аслисен, мăн аслашшĕн çар ĕçне малалла тăсать. Суворов училищи хыççăн çар институтĕнче вĕренет. Вăл – пулас офицер-артиллерист.

Пăрăнтăкри И. Васильев фронтовик çемйинчен йĕркелĕхпе законлăха хӳтĕлекен 4 специалист тухнă. Асли, Александр,



**Васильев А.И.**

çирĕмре СССР Шалти ĕçсен министерствин Елабугăри ятарлă вăтам пĕлӳ паракан милици шкулне вĕренме кĕнĕ. Кайран Çĕрпӳ, Патăрьел, Хĕрлĕ Чутай районĕсенче çынсен канлĕхне хураллană. Вăл милици органĕнчи хĕсмет пусми тăрăх тивĕçлипе утса тухнă: районти шалти ĕçсен пайĕн пуçлăхне çитнĕ. Хĕçпăшалланнă хăрушă преступника тытса чарнăшăн А. Васильев подполковника, «Паттăрлăхшăн» орденпа наградăланă.

Кĕçĕннисем те пиччĕшĕн йывăр та кансĕр профессине суйласа илнĕ. Шкултах хăйсене спортра пиçĕхтернĕскерсем, çар службинче тăнă, мирлĕ вăхăтра та милици хĕсметне кĕнĕ. Геннадий «Çăмăл атлетика» журнал парнисемшĕн пынă ăмăртура шкул ачисем хушшинче 800 метра чупса Пĕтĕм Союзри ăмăртура çĕнтернĕ. Вăл милици органĕнче ĕçлесех тивĕçлĕ канăва тухрĕ, чылай вăхăт Çĕрпӳре, Красноармей-скинче (шалти ĕçсен пайĕн начальникĕ) ĕçлерĕ.

Анатолийпе Олег Амур çинчи Комсомольск хулинче тĕпленнĕ. Асли милицин участокри уполномоченнăйсен службин начальникĕ, капитан. Хăй вăхăтĕнче облаçри чи лайăх уполномоченнăй ятне тивĕçнĕ. Олег та офицер. Халĕ лейтенант аслă милицин хулари уполномоченнăйĕ.

Паллă ĕнтĕ, чăвашлăхра аслисем ачисене пĕчĕкренех ĕçре пиçĕхтерсе ӳстерме тăрăшнă. Ахальтен мар ваттисен сăмахĕ «Улттăри арçын ача хăрах урине сăпкара, теприпе – акара» тенĕ. Ĕç йĕркине ачасем выляса ашшĕ-амăшне евĕрлесе хăнăхнă. Çапла майпах физкультура юхăмне кĕнĕ. Кĕçĕн тата вăтам класри ачасем шкул шайĕнчи ăмăртусене çеç хутшăнаççĕ-ха. Çак ĕçе куллен тата тĕллевлĕ, тĕрлĕ енлĕ пурнăçласа пыни вара спорт тĕнчин алăкне уçма, сывлăхăн çирĕп никĕсне хывма май парать.

Ăнланатпăр ĕнтĕ: вăтам шкулсенче те вăрçă хыççăнхи çулсенче физкультура юхăмне аталантарма пурлăх никĕсĕ çителĕксĕр пулнă. Хальхи ăнлавлă стадион пирки калаçу та пулма пултарайман. Физкультура урокĕсене шкул çурчĕпе юнашарти тӳрĕрех вырăнсенче ирттернĕ. Вăл вăхăтра педагогсен кадрĕсем çитмен.


Ильин Д.

1956 çулхи вĕренӳ тапхăрĕ умĕн Мăн Шетмĕне ĕçлеме Дмитрий Ильин каччăна яне. Роно приказĕпе килĕшӳллĕн ĕнерхи тинĕс-çар матросĕн кунта физкультура ирттерме тивнĕ. Хăйĕнчен мĕн кĕтнине лайăх ăнланнă çамрăк. Флотра пулин те, çарта ирттерекен 3 километрлă кроссене çулсеренех хутшăннă. 1953 çулта Балтии тинĕс ăмăртăвĕнче вара пĕрремĕш вырăн йышăннă.

Çамрăк физрук тăрăшнипе пурăна киле стадион валли çĕр уйăрса илеççĕ, футбол формине туянаççĕ. Вăл вăхăтра шкулти физкультура совечĕ лайăх ĕçленĕ. 1967 çулхи октябрĕн 17-мĕшĕнче стадион уçиччен сахал мар тарлама тивнĕ спорта юратакансен.

Тĕллеве пурнăрлас тесе тавçăруллă яш-кĕрĕм чеелĕхпе те усă курнă. Уява вăл вăхăтра Муркаш районĕнче кĕрленĕ Тивĕш футболисчĕсене хăнана чĕннĕ. Вĕсем вăййа килĕшӳллĕ тумтир тăхăннă. Мăн Шетмĕсем вара кунти пуçлăхсене «тĕксе илес» тесе кам çăпатапа, кам атăпа футболла выляма тухнă. Кил хуçисене намăс пулнă: форма çук, вăйăра выляса янă. Тепĕр куннех делегаци Шупашкара спорт форми пуянма кайнă: ĕнер халăх умĕнче каланă сăмах директорăн тытмаллах пулнă.

Йĕлтĕрпе те çавнашкалах лару-тăру сиксе тухнă. Тимлĕх уйăрма пуçласанах кăтартусем ӳснĕ. Ботинкăллă пирвайхи комплекта хастар Эдуард Филиппова панă. Çĕнĕ йĕлтĕрпе Мăн Шетмĕ каччи Çĕрпӳри (ун чухне красноармейскисем ку района кĕнĕ) ăмăртура çĕнтерет, пĕрремĕш разряд нормативне тултарать. Çакăн хыççăн пăр тапранать те. Стадион пушă вăхăтра шкул ачисене кăна мар, ялти çамрăксемпе педагогсене те хăй патне йыхĕрать.

Мăн Шетмĕсем хăйсене тахçин «кӳрентернĕ» Тивĕшсене те, таврари ытти футболистсене пысăк шутпа парăнтарнă. Ку енĕпе уйрăмах А. Львов, И. Скворцов, И. Гурьев, Л. Брызгалов, И. Филипповпа Н. Власов вратарьсем хастар пулнă. Аслисем пулăшнипе кĕçĕннисем те «Сăран мечĕк» ăмăртура районта мала тухнă.

Акă мĕнле аса илет вăл тапхăр пирки ун чухнехи Дмитрий Ильич Ильин педагог. «Йĕлтĕрсене тĕрлĕ виçерисене 50 мăшăр тупнăччĕ. Мана пуçламăш çар никĕсне вĕрентекенĕ пулма сĕнчĕç. Тĕл перекенсене палăртас тесе ку енĕпе кăмăл тăвакансен секцине йĕркелерĕм. Пирĕн шкулăн 12 винтовка, ППШ 3 автомат, 1 пневматикăллă тата пĕчĕк патронлă 5 винтовка курччĕ. 1968 çулта республикăри тĕл перекен шкул ачисен ăмăртăвĕ пулчĕ. В. Трофимов – Роно пуçлăхĕ – мана хамăр вĕрентекенсемпе мар, районăн пĕрлештернĕ командипе ярасшăн. Вĕсем вара выртса начар мар переççĕ. Анчах тăрса тата чĕркуççирен пенĕ чухне ăнăçтараймаççĕ. Пистолетран пачах та персе курман...

Командăра 4 арçын ачапа 1 хĕр ача. Килте ăнăçлахчĕ-ха. Анчах ăмăртура чи лайăх перекен Алексей Петров «мелкашкăран» 100 очкоран 49 çеç илчĕ. Комсомольскисем пирĕнтен пурĕ 29 очко выляси илчĕç. Иккĕмĕш кунĕнче пистолетран ăнăçлах петĕмĕр. Ялта тренировкăсене йĕркеллĕ ирттерни пулăшрĕ. (Пистолетне СХТри Лукин мана 3 уйăхлăхах парса янăччĕ). Çапла эпир районти командăсем хушшинче пĕрремĕш вырăн тухрăмăр».

1973 çулта тăван шкула аслă пĕлӳллĕ специалист килни Мăн Шетмĕ тăрăхĕнче спорт юхăмне тата хăватлăрах аталантарса ярать. Тепĕр çулнех шкул команди республикăри «Советская Чувашия» хаçатăн эстафета чупăвне хутшăнать, тăваттăмĕш вырăна тухать. 1975 çулта ку ăмăртура Э. Филиппов çăлтăрĕ ялкăшма тытăнать: вĕсем çĕнтерӳçĕсем. Тепĕр 3 çул хушши пьедесталăн çӳлти картлашки çинче никама та хăпартман В. Васильев паттăр ентешĕсем. Çамрăк специалист çăмăл атлетикăсăр пуçне хăвăрт утас тата биатлон спорчĕсене те сарма тăрăшнă. 1976 çулта республикăри шкул ачисем хушшинче Мăншетмĕсем биатлонпа пĕрремĕш вырăн йышăннă. Çулла вара Ульяновск хулинче иртнĕ «Урожай» ирĕклĕ спорт обществин тĕп совечĕн Пĕтĕм Раççейри ăмăртăвĕнче çĕнтернĕ.

Чи лайăх биатлонистсем: Мăн Шетмĕри Климентий Васильев, Вениамин Григорьев (Четрик) тата Кушарти Геннадий Васильев. Вĕсем виççĕшĕ те спорт мастерĕн кандидачĕ пулса тăнă. Клим Васильев юниор ӳсĕмĕнче Мурманск хулинче пулнă ăмăртура виççĕмĕш кăтартупа савăнтарнă.

1978 çулта чăваш вĕренекенĕсем тепĕр çитĕнӳ тунă: «Çăмăл атлетика» журнал парнисемшĕн пынă кĕрешӳре вĕсем Пĕтĕм Союзра иккĕмĕшсем пулнă. Команда чысне Васильев Геннадий (Пăрăнтăк – 800 метрта I, кайран – милици подполковникĕ); Кушарти Васильев Геннадий (1500 – I, кайран – ЧГПИ преподавателĕ), Михайлова Людмила (Шăпăрлăвар – 400 м – I); Яковлева Елена (Юнкун – 1500 – II); Семенов Ве-ниамин (Ыхракассы – 300 м – II) ăнăçлă хӳтĕленĕ.

1979–1989 çулсенче çĕр шывăн пĕрлештернĕ командине кĕнĕ Сергей Афанасьев ячĕ вăл вăхăтри СССР спорчĕн историне ылтăн йĕркепе кĕрсе юлнă. Шкул ӳсĕмĕнчех Анаткас çамрăкĕ Раççейре 1500 метрлă дистанцире пĕрремĕш, Союзра 3 километртра иккĕмĕш кăтартупа каларнă. Европăра мала

тухассишĕн пынă ăмăртусенче вăл 2 хутчен кĕмĕл (пĕри Е.К.), пĕр пăхăр медальсене çĕнсе илнĕ. 2 хутчен СССР рекордне улăштарнă, 4 хутчен çĕр-шыв чемпионĕ пулнă. Тĕнче шайĕнчи вуншар кĕрешӳре çĕнтернĕ, призерсен йышне кĕнĕ.

Э.Г. Филипповпа В.А. Семенов Мăн Шетмĕри вăтам шкулта ĕçленĕ тапхăрта кунтан вĕренсе тухнă çамрăкран I-тĕнче класлă спорт мастерĕ;

7 – спорт мастерĕ;

19 – спорт мастерĕн кандидачĕ;

54 – пĕрремĕш разрядник;

19 – Пĕтĕм Раççейри ăмăртусен призерĕ;

30 – яхăн ЧР чемпионĕне мала тухассишĕн пынă кĕрешӳсен çĕнтерӳçи.

Вĕренсе тухнă 22 каччăпа хĕр физкультурник ĕçне суйласа илнĕ, аслă шкулсенче, техникумсемпе колледжсенче, шкулсенче тăрăшаççĕ. Халĕ ĕнтĕ вĕсенчен чылайăшĕн хăйсен вĕренекенĕсем, ят-сума тивĕçне атлетсем пур.

Спортпа туслă çемьесен йышне чи малтанах Мăн Шет-мĕри Филипповсемпе Васильевсене, Анаткасри Семеновсене, Никитинсемпе Герасимовсемпе, Ыхракассинчи Семеновсене, Кушарти Григорьевсене, Юнкунри Разбойкинсене, Вăрманкасри Яковлевсене, Çĕньялти Скворцовсемпе Григорьевсене тата ыттисене кĕртмелле пулĕ.

Эдуард Филиппов ăста спортсмен тата тренер пулнине пурте аван пĕлетпĕр Анчах та ку вăл тӳперен татăлса анмасть, çемьерен пуçланать. Ашшĕ Георгий Филиппович Сталинграда хӳтĕлесе Хĕрлĕ Çăлтăр илнĕ фронтовик ачисене пĕчĕклех пиçĕхтерсе ӳстерме тăрăшнă. Хĕллехи тапхăрта Эдикпа Кольăна сунара илсе çӳренĕ, тĕл пеме вĕрентнĕ. Çавăнпах ĕнтĕ асли йĕлтĕрпе биатлон спортне килĕштернинчен, физкультура учителĕн ĕçне суйласа илнинчен нимĕн тĕлĕнмелли те çук.

Ираида Николаевнапа Эдуард Георгиевич Филипповсем хăйсен виçĕ хĕрне те ĕçре тата спортра пиçĕхтерсе ӳстерме тимленĕ. Туслă кил-йышри Наташа, Настя тата Надя шкулăн вĕресе тăракан пурнăçĕнчен юлман, ытти çамрăксем пекех тĕрлĕ ăмăртусене хутшăннă. Наташа ашшĕ-амăшĕн ĕçне килĕштернĕ. Вăл халĕ Пикшикри пĕтĕмĕшле вăтам пĕлӳ паракан шкулта кĕçĕн классенче вĕрентет. Настя та аппăшĕ пекех республикăри



**Филиппов Э.Г. çемйипе.**

«Советская Чувашия» тата «Молодой коммунист» хаçатсен парнисемшĕн кĕрешнĕ. Баскетбол вăййине килĕш-тернĕ. Ку енĕпе те районти ăмăртусене хутшăннă Н. Филиппова та шкул командин чысне ăнăçлă хӳтĕленĕ, виççĕшĕ те ашшă-амăшĕн ятне çӳлте тытнă.

Г. Филиповăн кĕçĕн ывăлĕ те спортсмен. Пиччĕшĕнчен вĕренсе пынă Николай, ун пекех çаврăнăçуллă та вăйлă пулма тăрăшнă. Вăл ытларах йĕлтĕрпе çăмăл атлетика спортне, волейболпа футбол вăййисене килĕштернĕ. Вăтăр пилĕк çул каяллах вăрăм дистанцие чупассипе спорт мастерĕн кандидачĕн вăхăтне кăтартнăччĕ. Шăпах çав тапхăрта паллашнă Упаçырма каччи Светланăпа. Çăмăл атлетикăна юратнă икĕ çамрăк кĕçех çемье чăмăртаççĕ. Алешăпа Сашăна çуратса пăхса ӳстереççĕ. Ачисем çăмăл атлетика секцине çӳренĕ. Футболла тата хокейла выляма юратнă. 1984 çулхи фотоӳкерчĕкри ывăлсем каччă пулнă ĕнтĕ. А. Филиппов Шупашкарти патшалăх университечĕн машинăсем тăвакан факультетрин вĕренсе тухнă. Саша Мускаври университетри пĕлӳ илнĕ, халĕ те çав хуларах ĕçлет. Çĕнĕ Шупашкарта пурăнакан Николай Георгиевичпа Светлана Михайловна Филипповсем пĕр фирмăра ĕçлеççĕ.



**Филиппов Н.Г. мăшăрĕпе тата ывăлĕсемпе.**

Ыхракасенчи Семеновсене те Трак тăрăхĕнче чылайăшĕ пĕлеççĕ. Мăн Шетмĕре вĕреннĕ тапхăрта туслă та шанчăклă спортменсем пулнине палăрса тăнă вĕсем. Халĕ вара пĕр тăвансене кăтартуллă ашшĕ-амăшĕ тата харпăр хăй ĕçĕнче ăста специалист тесе хисеплеççĕ. Кĕçĕн Семеновсем вара ашшĕ-амăшĕ паян районта спорт ветеранĕ шутланса тăнипе тивĕçлипех мухтанаççĕ.

Валерий Семенов пĕчĕкреххисемшĕн Ямайкассинчи тата Мăн Шетмĕре пĕлӳ илнĕ тапхăртах ырă тĕслĕх шутланнă: çăмăл атлетикăпа, йĕлтĕр спорчĕпе туслă пулнă. Республикăри эстафетăсенчен çĕнтерӳпе таврăннă. Теннис, волейболпа футбол вăййисене килĕштернĕ.



Семенов Вениамин



Семенов Валерий



Семенов Владимир



Семенов Виталий

Халĕ газ уçлакан компрессор станцийĕн сменăри инженерĕнче вăй хурать. Спортакиадăра вара çамрăксемпе пĕрлех хăйсен службин чысне ăнăçлă хӳтĕлĕт. Ывăлĕ Сергей – паллă футболист. 2003 çулта вăл вылякан çамрăксен «Факел» команди Чăваш Республикин кубокне çĕнсе илнĕччĕ. Света ирĕклĕ майпа кĕрешме юрататъ, чупма (çăмăл атлетика) кăмăллатъ.

Вениамин та çамрăк-ха, 45 çул урлă çеç каçнă. Шупашкарти планпа экономика техникумĕнче ăс пухнă вăхăтра Мăн Шетмĕре мĕн илнине аталантарса пынă. Печен тата командăпа çăмăл атлетикăра, эстафетăра тата кросра, йĕлтĕрпе чупас-сипе республикăра мала тухнă. Ывăлĕ те ашшĕнех хывнă. Вăл кĕске дистанцие кăмăллатъ. Планпа экономика колледжĕнче вĕренекен Алеша ятарлă вăтам пĕлӳ паракан вĕренӳ заведенийĕсем хушшинче 2005 çулта çăмăл атлетикăпа иртнĕ ăмăртусенче çĕнтернĕ, 3 медале тивĕçнĕ.

Владимирпа Виталий та пиччӗшсен ҫулнех такăрланă. Ульяновскри электромеханика техникумӗнче вӗреннӗ тапхăрта ку облаç чемпионӗ пулнă. Раççей Газпромӗ йӗркелекен Спарта-киадăра Владимир Семенов полиатлонра (унта турник ҫинче туртăнасси, пăшалтан тӗл пересси тата йӗлтӗрпе чупасси кӗрет) 40 ҫултан иртнӗ спортсменсем хушшинче 4-мӗш вырăн йышăн-нă. Катя хӗрӗ шкулти ăмăртусенче йӗлтӗрпе чупма кăмăллать. Ҫурҫӗр флочӗн матросӗ хăй вăхăтӗнче спорт мастерӗн канди-дачӗн ятне тивӗҫнӗ.

Виталий газ уҫлакансен йышлă коллективӗнчи физкультурăпа спорт ӗҫне туса пыракан инструктор. Унăн чи малтанах хăйӗн ку енӗпе тӗслӗх кăтартмалла. Ҫапла тăвать те вăл, унăн ҫемйи. Пединститутăн ку енӗпе специалистсем хатӗрлекен факультетӗнче пӗлӳ пухнă, йӗлтӗр, ҫăмăл атлетика, биатлон ăмăртăвӗсене хутшăннă. Халӗ сывă пурнăç йӗркисене сарас, ӗҫлекенсене тӗрлӗ спорт мероприятийӗсене явăҫтарас тӗллевпе тăрăшать. Аслисен ятне ҫӳлте тытать. «Атте, анне тата эпӗ – спорт ҫемйи» ятпа иртнӗ нумай енлӗ кӗрешӳре Виталий, Алина, Семенпа Евгений Семеновсем Спортакиадăн тӗп парнине – тӗрлӗ тӗслӗ телевизор – ҫӗнсе илчӗҫ.

Ҫӗньял Шетмӗри Алексей Скворцов вăтам шкулта вӗреннӗ чухнех хастар спортсмен пулнă. Кунти ҫамрăксен физкультура коллективӗн совечӗн членӗ шутланнă. 1970–1973 ҫулсенче районти чи пултаруллă атлет республикăра та палăрнă. 1971 ҫулта «Коммунизм ялавӗн» эстафетинче 4 х 100 метра чупса Траксем ҫӗнтернӗ. Юлашки этапра шăпах А. Скворцов чупнă.

Республикăри 10 енлӗ ăмăрту «Текстильщик» (хальхи «Спартак») стадионта иртнӗ: Ҫӗньял ҫамрăкӗ унта 4-мӗш вырăна тухнă. «Урожай» спорт пӗрлӗхӗ йӗркеленӗ кӗрешӳре, 175 сантиметр ҫуллӗшне сиксе, иккӗмӗш кăтартупа палăрнă. Районăн 9 рекордне ҫӗнетнӗ вăл хăй вăхăтӗнче.

Кил-йышӗпе те старта сахал мар тухнă. Алексей, Валентина, Эдикпа Лена, Аня ачисемпе Скворцовсем йӗлтӗр спорт эстафетинче районта та ҫӗнтеркеленӗ. Ашшӗн ыра тӗслӗхӗ ывăлне те хавхалантарнă. Вăл ҫар училищинчен, академийӗнчен вӗренсе тухнă. «Паттăрлăхшăн» орденпа медальсене тивӗҫнӗ.

Алексей Петрович «Большевик» колхозра спорта аталантарассишӗн чылай тăрăшнă. Профком председателӗ, Пикшик ял



**Спорт ветеранĕсем:**
**А. Скворцов (сылтăмра), Л. Соловьев, И. Филлипов.**

ĕçтăвкомĕн пуçлăхĕ пулнă тапхăрта ялсенче футбол, волейбол площадкисене йĕркелеттернĕ, вĕсенче вăйăсем ирттернĕ. Çĕньялти Н. Григорьев, Л. Соловьев, В. Иванов, И. Григорьев тата ыттисем те хăйсен ялĕн чысне ăнăçлă хӳтĕленĕ.

Çамрăк чухнехи ӳкерчĕкре А. Скворцов, Л. Соловьев тата И. Филиппов вратарь.

## СПОРТ ВЕТЕРАНĔСЕМ

### Мăн Шетмĕре вĕреннĕ, спортра тава тивĕçлĕ ят илнĕ çынсем

### Тĕнче класлă спорт мастерĕ

Афанасьев Сергей Германович (Анаткас) – çăмăл атлетика.

### Спорт мастерĕсем

Антонов Юрий Антонович (Пăрăнтăк) – нумай енлĕ çар кĕрешĕвĕ (многоборье).

Арсентьев Иван Николаевич (Çĕньял Шетмĕ) – çăмăл атлетика.

Васильев Климентий Геннадьевич (Мăн Шетмĕ) – биатлон.

Григорьев Геннадий Филиппович (Пикшик) – Ирĕклĕ майпа кĕрешеси.

Григорьева Лилия Яковлевна (Кушар) – хăвăрт утасси.

Иванова Ирина Анатольевна (Кăлава) – футбол.

Маркова Алевтина Анатольевна (Пăрăнтăк) – хăвăрт утасси.

Прокопьев Василий Александрович (Кушкă) – çăмăл атлетика.

Яковлев Андрей Николаевич (Вăрманкас Шетмĕ) – çăмăл атлетика.

### Спорт мастерĕн кандидачĕсем

Александров Леонид (Кăлава) – çăмăл атлетика.

Васильев Герман Геннадьевич (Мăн Шетмĕ) – ирĕклĕ майпа кĕрешесси.

Васильев Геннадий Николаевич – çăмăл атлетика.

Вячеслав Лев Вячеславович – йĕлтĕрпе чупасси.

Васильев Владимир Васильевич (Мăн Шетмĕ) – çăмăл атлетика.

Григорьев Александр – çăмăл атлетика.

Григорьев Вениамин – биатлон.

Данилова Алена – çăмăл атлетика.

Моисеев Владимир Вячеславович (Тăхăр така) – çăмăл атлетика.

Никитина Венера – çăмăл атлетика.

Никитина Татьяна Владимировна (Анаткас) – çăмăл атлетика.

Михайлов Зиновий Михайлович – йывăр атлетика.

Семенов Владимир Семенович (Опрыскино) – биатлон.

Семенов Владимир Вячеславович (Ыхракасси) – çăмăл атлетика.

Спиридонов Всеволод Егорович (Пикшик) – çăмăл атлетика.

Тихонов Валерий Архипович (Кӳлçырма) – çăмăл атлетика.

## Аслă пĕлӳ илнĕ физкультура учителĕсемпе тренерсем

Арсентьев Иван
Афанасьев Сергей
Васильев Климентий
Васильев Владимир
Васильев Геннадий
Григорьев Валерий
Григорьев Владимир
Григорьев Геннадий
Гурьев Владимир
Данилов Алексей
Моисеев Владимир
Петров Василий
Прокопьев Василий
Семенов Виталий А.
Семенов Виталий В.
Семенов Владимир
Спиридонов Всеволод
Филиппов Эдуард
Яковлев Андрей



Мăн Шĕтме шкулĕн эстафетăри çентерÿçĕ команда.

**Пĕтĕм Раççейри ăмăртусене мала тухнă**

Антонов Юрий
Арсеньтьев Иван
Васильев Геннадий Иванович
Васильев Геннадий Николаевич
Васильев Клим
Григорьев Вениамин
Григорьев Владимир
Григорьева Оксана
Ефимов Виталий
Михайлова Людмила
Петрова Ира
Семенов Вениамин
Семенов Владимир
Тихонов Валерий
Яковлева Ульяна
Яковлев Андрей

Кунта çакна каласа хăварни юрăхлă: шкул дирекцийĕ (вăрçă хыççăнхи çулсенче пуçлăхра Никонор Григорьев, Лилия Скворцова, Леонид Кузьмин, Виталий Павлов, Николай Петров, Николай Петров, Фаина Петрова тата ыттисем тиленĕ) çӳлерех асăннă физруксене май килнĕ таран пулăшма тăрăшнă. Педагогсем хăйсем спортăн тĕрлĕ енĕпе интересленнĕ, районти, республикăри ăмăртусене хастар хутшăннă.

Пĕрле килĕштерсе ĕçлени вĕренекенсем хушшинче çарпа патриотизм туйăмне çирĕплетме, паллă ентешĕмсемпе мухтанас кăмăла çĕклеме пулăшнă. Çар ĕçĕсен руководителĕ Лев Иванович Михайлов пуçарнипе 1975 çулта шкулта çарпа ĕç мухтавĕн кĕтесне уçнă. Каярахпа вăл районти кунашкал пĕрремĕш музей пулса тăнă. Шкул ачисен командисем районти тата республикăри çамрăк армеецсен «Зарницăпа» «Орленок» çар вăййисенче çĕнтерме пуçланă.

Акă, 1985 çулта аслă классем «Орленокра» республикăра виççĕмĕш вырăн йышăннă.

Шкулта пур енĕпе те пиçĕхни чылай çамрăка çар службине йĕркеллĕ иртерме май панă. Дисциплинăна хăнăхнă вуншар каччă кайран çĕр-шыва хӳтĕлес е обществăлла законлăхпа йĕркелĕхе тытса пырас ĕçе кӳлĕннĕ. Аслă ăрури Прохор

Трофимовпа Геннадий Волков (Анаткасран), Иван Павловпа Николай Григорьев (иккĕшĕ те Тури Типçырма), Яков Архангельский (Мăн Шетмĕ), Селиван Ефимов хастарсем полковника çити ÿсрĕç, тĕрлĕ орденсене тивĕçрĕç. Вĕсен мухтавлă кун-çулĕ çамрăксене хавхалантарса тăнă. Аслисен тĕслĕхĕ чылай каччăна офицер тумтирне тăхăнма кăчăк туртнă. Геннадий Львов Четрикрен, Волков Геннадий (Анаткас), Виталий Степанов (Кушкă) виçĕ пысăк çăлтăрлă формăна тивĕçрĕç. Пăрăнтăкри Александр тата Геннадий Васильевсем, Кушкăри Василий Прокопьевпа Евгений Андреев, Андреев Борис (Пăрăнтăк), Кăлавари Иван Ефимов, Мăн Шетмĕри Андрей Архипов, Юнкунри Виталий Серебряков, Çĕньял – Шетмĕри Эдик Скворцов – подполковниксем.

Вĕсем те хăйсене пăхăнса тăракансене çĕр-шыва хÿтĕ-леме хатĕр тăма, пурнăçра хастар пулма вĕрентнĕ. Пирĕн тăрăхри вуншар çамрăкăн тĕнчери «хĕрÿ вырăнсенче пулма тÿр килнĕ. Е. Андреевпа (Кушкă) Н. Яковлев (йĕпрем) паттăрлăхшăн Хĕрлĕ Çалтăр ордена, чылай салтак «Хăюлăхшăн» е «Çапăçури ĕçсемшĕн» медальсене тивĕçнĕ.

## Тупмалли

УМСĂМАХ .......... 3
ШКУЛ – ПĔЛӲ ÇĂЛКУÇĔ .......... 5
ПАЛЛĂ ÇЫНСЕМ .......... 14
АН ПУЛТĂР ВĂРÇĂ НИХĂÇАН .......... 26
АСТĂВĂМ КĔНЕКИНЧЕН .......... 31
МĂН ШЕТМĔРИ ВĂТАМ ШКУЛ ДИРЕКТОРĔСЕМ .......... 48
ВĔСЕНЕ МĂН ШЕТМĔ ÇĔРĔ ӲСТЕРНĔ, ÇЫН ТУНĂ .......... 50
ПĔРИ ВĔРЕННĔ, ТЕПРИ ĔÇЛЕНĔ .......... 53
СПОРТРА, ЧЫСЛĂ ĔÇПЕ ПАЛĂРНИСЕМ .......... 54
ÇЫРАВÇĂСЕМ .......... 61
ÇЕМЬЕ ДИНАСТИСЕМ .......... 66
СПОРТ ВЕТЕРАНĔСЕМ .......... 80

**В. З. Константинов, А.И. Васильев**

# АВАЛЛĂХРА ĂС ТАТА ВĂЙ

(Мăн Шетмĕ шкулĕ 175 çулта)

# УМ И СИЛА – ИЗ ДРЕВНОСТИ

Редактор *Э.И. Патмар*
Корректор *Г.И. Алимасова*
Верстка и дизайн *Л.Н. Федоровой*

Подписано в печать 23.09.08.
Формат 60x84/16. Гарнитура Arial.
Бумага офсетная. Печать оперативная.
Физ. печ. л. 5,5. Тираж 250 экз. Заказ № 121.

Отпечатано в типографии «Новое Время».
428034, г. Чебоксары, ул. Мичмана Павлова, 50/1.
Тел.: (8352) 41-27-98, 46-43-46.
E-mail: newtime1@mail.ru

## СĔНЎСЕМ,
## ШУХĂШСЕМ,
## ХУШУСЕМ ...

В. З. Константинов, А.И. Васильев

# АВАЛЛĂХРА ĂС ТАТА ВĂЙ

(Мăн Шетмĕ шкулĕ 175 ҫулта)

# УМ И СИЛА – ИЗ ДРЕВНОСТИ

Редактор Э.И. [illegible]
Корректор Г.И. [illegible]
Верстка и дизайн Л.Н. Федоровой

Подписано в печать 23.09.08.
Формат 60х84/16. Гарнитура Arial.
Бумага офсетная. Печать оперативная.
Физ. печ. л. 5,5. Тираж 250 экз. Заказ № 121.

Отпечатано в типографии «Новое Время»
428034, г. Чебоксары, ул. Мичмана Павлова, 50/1
Тел.: (8352) [illegible], 46-43-46.
E-mail: [illegible]



25:-